чебоксарский

Пĕр №-рĕ 10 пус. *19-мĕш çул тухать.*

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябĕр 12 ытларикун 235 (4747)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСН(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Дежурнăйăн 6—23, Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88

ССР СОЙУЗĔН АСЛĂ СОВЕТНЕ СУЙЛАМАЛИ КУН ÇИНЧЕН

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сиесĕ йышăннă постановлени тăрăх тата „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 72-мĕш статйи ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас куна суйлав срукĕччен икĕ уйăхран кайа йулмасăр малтан тата ĕçлемен куна палăртса хурасси çинчен калани тăрăх, ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăнат:

1. ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне 1937 ÇУЛТИ ДЕКАБĔРĔН 12-МĔШĔНЧЕ иртермеле тăвас.

2. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали суйлав кампанийĕ 1937 çулти октябĕрĕн 12-мĕшĕнчен пуçланасси çинчен пĕлтерес.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ— М. КАЛИНИН.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвком Президиумĕн членĕ— А. АНДРЕЙЕВ.

Мускав, Кремљ.
1937 çулти октябĕрĕн 11-мĕш.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççин составне çирĕплетесси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 34-мĕшпе 35-мĕш статйисем тăрăх, ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççине общĕствăлă организацисемпе ĕçсынин общĕствисен çак представителĕсенчен çирĕплетме йышăнат:

Тĕп Суйлав Комиççин председателĕ **Москатов Петр Григорйевич**—Профессилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Советĕнчен.

Тĕп Суйлав Комиççи председателĕн заместителĕ **Шмидт Отто Йулйевич**—Аслă шкулсемпе Аслăлăх учреждени Работникĕсен Профессилĕ Сойузĕнчен.

Тĕп Суйлав Комиççин секретарĕ **Маленков Георги Максимилианович**—Политикла-çутĕç учреждени Работникĕсен Профессилĕ Сойузĕнчен.

Тĕп Суйлав Комиççин членĕсем:

Хрущчов Никита Сергейевич—Мускаври Коммунисла организацинчен,

Угаров Александр Иванович—Ленинградри Коммунисла организацинчен,

Мехлис Лев Захарович—„Правда“ хаçат работникĕсен коллективĕнчен,

Шолохов Михаил Александрович—Совет Писателĕсен Сойузĕнчен,

Косарев Александр Василйевич—Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕнчен,

Горшенин Павел Сидорович—ССР Сойузĕн Оборонине тата Авиацие Хими строителĕствине Пулăшакан Общĕствă (Осоавиахим) Тĕп Советĕнчен,

Шаповалова Татйана Петровна—Воронеж облаçĕнчи „Бољшевик“ колхоз колхозникĕсенчен,

Колесник Николай Филиппович—Харьковри трактăр завод рабочийĕсенчен, служащийĕсенчен тата инженерĕсенчен,

Симонженкова Матрена Куçминична—„Октябрьская революция“ йачĕпе тăракан фабрик рабочийĕсенчен, служащийĕсенчен тата инженерĕсенчен,

Шаповалов Йевдоким Илларионович—Краснодар крайĕнчи „Новый мир“ колхоз колхозникĕсенчен,

Йевтушенко Дмитрий Матвейевич—Кийĕври Коммунисла организацинчен,

Йусупов Усман—Узбек Коммунисла организацинчен.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ—**М. Калинин.**

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвком Президиумĕн членĕ **А. Андрейев.**

Мускав, Кремљ.
1937 çулти октябĕрĕн 11-мĕш.

Сойуз Советне тата Национаљнăçсен Советне суйламали суйлав округĕсем çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çак çулхи октябĕрĕн 11-мĕшĕнче, ССР Сойуз Конституцин 34-мĕшпе 35-мĕш статйисем тăрăх тата „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 21-мĕш, 22-мĕш, 23-мĕш тата 24-мĕш статйисем тăрăх, Сойуз Советне суйламали 569 суйлав округĕ тата Национаљнăçсен Советне суйламали 574 суйлав округĕ тума йышăннă.

Чăваш АСС Республикĕ тăрăх çак суйлав округĕсене тунă:

А) Сойуз Советне суйламали суйлав округĕсем:

Шупашкар суйлав округĕ № 364 (центр—Шупашкар хули).

Шупашкар хули тата районсем: Шупашкар, Тутаркас, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ тата Трак районĕнчи йалсоветсем: Малти Трак, Мăн Шетмĕ, Итмар, Имен касси, Ÿсек, Карай, Мартынкасси, Анатри Тип Çырма, Пшонкă, Çавал Çырма, Чатукасси, Шурçырма, Шупуç, Хусакасси, Йаманак тата Йеншик Чуллă.

Канаш суйлав округĕ № 365 (центр—Канаш хули).

Районсем: Канаш, Куславкка, Вăрмар, Тăвай, Шăхасан тата Трак районĕнчи йалсоветсем: Супар, Алманч, Турхан Упи, Тусай, Кушар, Метикасси, Уйкас Йунтапа, Тĕрер, Упи тата Йанкас.

Улатăр суйлав округĕ №366 (центр—Улатăр хули).

Районсем: Улатăр, Патăрйел, Шăмăршă, Йĕпреç, Турхан, Шăнкăртам, Кувакинă тата Пăрачкав районĕнчи йалсоветсем: Пĕрремĕш Анастас, Иккĕмĕш Анастас, Антипино, Бахмутск, Висагино Вознесенск, Дурасово, Мочкасси, Миљутин, Напољново, Низовкă, Никулинск, Полибинск, Сеййоновск тата Студенецк.

Çĕмĕрле суйлав округĕ № 367 (центр—Çĕмĕрле хули).

Районсем: Çĕмĕрле, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Елĕк, Йетĕрне тата Пăрачкав районĕнчи йалсоветсем: Пăрачкав, Гарт, Кожевенск, Кудейевкă, Николљск, Козловкă, Рйабинск, Сийава тата Шадриха.

Б) РСФС Республикĕнчен Национаљнăçсен Советне суйламали суйлав округĕсем:

Горьки суйлав округĕ №15 (центр—Горьки хули).

Горьки облаçĕ тата Чăваш АССР.

В) Чăваш АСС Республикĕнчен Национаљнăçсен Советне суйламали суйлав округĕсем:

Шупашкар суйлав округĕ № 496 (центр—Шупашкар хули).

Шупашкар хули, Тутаркас районĕ тата Ишлей районĕнчи йалсоветсем: Ишлей-Покровск, Акрамово, Анаткас Марка, Анат Кинер, Мăн Йанăш, Ишек, Кшавăш, Мамка, Мамăш, Мишер, Оточево, Пĕрремĕш Алин, Сыпайкасси, Тивĕш, Тăрăн, Хăймалакасси, Чиканар, Чурачăк, Шетмĕпуç, Ентимĕркасси, Йамайкасси, Мăнал тата Йарапайкасси.

Шупашкар йал суйлав округĕ № 497 (центр—Шупашкар хули).

Районсем: Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри тата Ишлей районĕнчи йалсоветсем: Мăн Катраç, Василкасси, Вăрман Сÿктер, Салапайкасси, Кибечкасси, Çĕнйал Покровск, Чантăр тата Йетĕрнекасси.

Çĕрпÿ суйлав округĕ № 498 (центр—Çĕрпÿ хули).

Районсем: Çĕрпÿ, Трак тата Шăхасан районĕнчи йалсоветсем: Матнÿ, Высоковка, Уйкас Кипек, Малти Унтавăш, Шăхаљ, Шăпăлка, Шуркасси, Йенĕш, Анатри Сурăм, Чуракасси тата Вăрман Йенĕш.

Вăрмар суйлав округĕ №499 (центр—Вăрмар станци).

Районсем: Вăрмар, Куславкка тата Тăвай районĕнчи йалсоветсем: Елпуç, Нишер, Çĕнпуйанкасси, Шимкуç.

Канаш суйлав округĕ № 500 (центр—Канаш хули).

Канаш районĕ тата Шăхасан районĕнчи йалсоветсем: Шăхасан, Атнаш, Малти Кипеч, Анат Вăрманйал, Çĕн Мами, Çĕнĕ Чăлкас, Ушанар, Троицк, Тусы Çармăс, Ухман, Чулкăмака, Шĕкĕр, Йамаш тата Тăвай районĕнчи йалсоветсем: Тăвай, Амалык, Гришино, Иваново, Çĕн Çырма, Йантăрч, Кармал, Кĕчкей, Мучар, Ново-Ишински, Вырăс Нăрваш, Çăлпуç, Тăрмăш, Тĕмер, Чутей, Нăрваш.

Йĕпреç суйлав округĕ № 501 (центр—Йĕпреç станци).

Районсем: Йĕпреç, Турхан тата Шăмăршă.

Патăрйел суйлав округĕ № 502 (центр — Патăрйел).

Районсем: Патăрйел, Йелчĕк тата Шăнкăртам.

Улатăр суйлав округĕ № 503 (центр—Улатăр хули).

Районсем: Улатăр тата Кувакинă.

Вăрнар суйлав округĕ № 504 (центр—Вăрнар станци).

Елĕк районĕ тата Вăрнар районĕнчи йалсоветсем: Вăрнар, Хапăс, Упнер, Иртеменкасси, Айкăш, Мăн Турхан, Мăн Йавăш, Пăртас, Вăрманкас, Йермошкино, Йершупуç, Карачура, Кÿлхĕрри, Пăвайел, Кушлавăш, Кăкшăм, Кољцовкă, Кăмаш, Кĕçĕн Йавăш, Мамалай, Нурăс, Уравăш, Санарпуç, Сендимиркино, Сăкăт, Çавалкас, Хирпуç, Хăмăш тата Çĕрпÿйел.

Çĕмĕрле суйлав округĕ № 505 (центр—Çĕмĕрле хули).

Районсем: Çĕмĕрле, Пăрачкав тата Вăрнар районĕнчи йалсоветсем: Чăрăшкасси, Уйкас, Йамбахтино, Шĕнер, Асăмсырми.

Йетĕрне суйлав округĕ № 506 (центр—Йетĕрне хули).

Районсем: Йетĕрне тата Хĕрлĕ Чутай.

(ТАСС).

Çĕпĕрти колхозсен вăйлă тырпулĕ

НОВОСИБИРСК, октябĕрĕн 10-мĕш (ТАСС). Новосибирск облаçĕнчи тата Алтай крайĕнчи колхозсем питĕ аван пулнă тырпула пухса кĕртсе çитерессĕ. Тырăна пĕр гектартан вăтамла шутласан 11,8 центнер, иртнĕ çулхинчен икĕ центнер патне ытларах илнĕ. Вăйлă тырпул мастăрĕ звено бригадирĕн Йефремăв пуçарăвĕ колхоз уйхирĕсен стахановцисен ăмăртăвĕнче чаплă çитĕнÿсем тума май панă. Белоглазовск районĕнчи „Победа“ колхозăн Плесовскипе Медикăв звенисем тулăна пĕр гектартан 30—34 центнер, уйрăм гектарсенчен 60—78 центнер туса илнĕ. Çавăн пекех тата Белоглазăв районĕнчи Ворошилов йачĕпе тăракан колхозăн Макарăвапа Мераликин звенисем, Благовещенск районĕнчи „Первое Мая“ колхозăн Дектярев звени тата ытти çĕршер звеносем вăйлă тырпул туса илнĕ.

—o✦o—

Çеçенхирти çĕнĕ куљтурлă хуласем

ДОН ÇИ РОСТОВ, октябĕрĕн 10-мĕш (ТАСС). Донра, Кубаньре тата Салљск çеçенхирĕсенче совет влаçĕн социалисăмла çĕр-ĕçĕ ÿссе пынипе пĕрлех çĕнĕ куљтурлă хуласем ÿссе çитĕнсе ларнă.

1929 çулта Мечетинск станицинчен айакрах мар, пушхир чукун-çулĕ çинчи Верблюд разйезĕ сывăхĕнче пулас 2 №-лĕ вĕренÿпе опыт зерносовхоз участкин пĕрремĕш куçса çÿрекен палаткисем вырнаçса ларнă. Сакăр çул хушшинче кунта Зерноградăн нумай хутлă суртсен корпусĕсем ÿссе çитĕнсе ларнă. Хулара 215 çурт, вĕсем хушшинче театр, калаçакан кино, вунăçул вĕренмели шкул, електростанци пур. Октябĕр револђуци 20 çул тултарнă тĕле иккĕмĕш пысăк електростанцине туса çитерессĕ.

Зерноградра çичĕ пин çын ытла пурăнат. Хулара кунсерен тухакан хаçат пур. Кунта пĕтĕм Сойузри инженерсемпе-механизатăрсен институчĕ, ăслăлăхпа-тĕпчев сăнав станцийĕ тата облаçри йалхуçалăх опыт станцийĕ пур. Совет Сойузĕн пĕтĕм савачĕсенчен çĕнĕ йалхуçалăх машинисене сăнаса пăхма Зерноградра йараççĕ. Кунтан йалхуçалăхне механизацилессипе тунă техникăла опытсен хаклăран та хаклă резуљтачĕсем пĕтĕм çĕршывĕпех саралаççĕ. „Гигант“ совхозĕн варринче ÿссе çитĕнсе ларнă тепĕр хулан историйĕ те унтан кайах мар уçăмлă. Çын пырса курман çеçенхир варринче техникум, пĕтĕм Сойузри совхоз уйрăмĕсен управљайушчисене вĕрентсе кăларакан шкул, рабфак, 1500 ача вĕренмели вăтам шкул корпусĕсем ÿссе ларнă. Хулан пысăк клубĕнче калаçакан кино пур тата театр тăваççĕ. Хула електричĕствăпа çуталса ларат. Хулара пурнакансем валљи 100 пысăк пурăнмали çурт, ведопровод, радио пур. Гигант хулара 60 койкăлă бољницă, амбулатори, ача йаслипе сат, ача çуратмали çурт, пысăк магазин уçнă. Çĕнĕ хула тавра „Гигант“ совхозăн уйрăмĕсем—вуникĕ куљтурлă посолкă ÿссе çитĕнет.

Таксăв авал ĕлĕкхи помещиксен економийĕ вăхăтĕнче пулнă мĕскĕн посолкăсем паламала мар саралнă, улшăннă тата хуласем пулса ларнă. Халĕ „Кубань“ пуйан совхозĕн центрĕ вырнаçса ларнă вырăнта 1933 çулта çеç начар çуртсем пулнă. Халĕ кунта пĕчĕкрех хула ÿссе ларнă. Вăл хулара 3.500 çын пурăнат. Унта вăтам шкул, гостиницă, клуб, калаçакан кино, мунча, електростанци, столовăй тунă, магазин тăваççĕ.

—o✦o—

Кружокра çеç ăнлантăм

ИШЛЕЙ. Вăрăмтури „Хĕрлĕ плуг“ колхозра 25 колхозник кружокра вĕренет. Кружокра Красавцĕв учител суйлав йĕркисем çинчен тĕплĕн ăнлантарса парат.

— Епĕ кружока çÿреме пуçличчен суйлав Положенине темиçе хут та вуласа тухнă, анчах ăнланман. Халĕ суйлас йĕркесене — сасăлассисене те, кандидатсем тăратассине те веçех ăнлантăм. Национаљнăçсен Советĕ çинчен те пĕлетĕп. Кружокра хам мĕн вĕреннине ытти колхозниксене ăнлантарса пама пултаратăп,—тет М, Çедов колхозник.

Й. Йефремăв.

Истори халиччен курман рабочи клас

Октябĕрти Социалисăмла Аслă револђуцин 20-мĕш уйавне çывхарнă май, Совет халăхĕ саккунлă тивĕçлĕхпе иртнĕ кун-çула çавăрăнса пăхат. Вăйлă, хайар пулнă кĕрешÿ. Сахал мар йăвăрлăхсене çĕнтермеле пулнă. Ун вырăнне вара мĕн пек тĕлĕнмеле улшăнчĕ пирĕн тăван çĕршыв!

Ĕлĕкхи патша Российĕн пысăк çĕршывĕнче, кайа йулнă, аграрлă, пăхăнса тăнă çĕршыв вырăнĕнче вăйлă, аслă, индустрилĕ совет державĕ туса хунă, унăн економикăлă никĕсĕнче хуçалăхăн социалисăмла системи, производствă оруди йĕсемпе хатĕрĕсем социалисăмлă харпăрлăх пулни тăрат.

Ленин—Сталин партийĕ илсе пыракан рабочи клас йертсе пынипе пирĕн çĕршыври халăхсем ĕмĕрхи капитал пусмăрĕнчен хăтăлчĕç. Вĕсем пĕрлешÿлĕ вăйпа çĕнĕ строй кĕрешсе илчĕç, хăйсен аллипе пуйан та куљтурăлă пурнăç туса хучĕç.

Йăвăр ниçта çутă курăнми начар пулнă капиталисăм вăхăтĕнче пролетарисен пурнăçĕ. Российă рабочийĕсен, капиталиссем валљи йумахри пек пуйанлăх кÿрсе, хăйсен ĕç вăйне йÿне сутмала пулнă. Патша Российĕнче кашни рабочи капиталиссене çулсерен, хăй ĕçлесе илнĕ ĕçукçинчен темиçе хут ытла услам кÿнĕ. „Çакăнтан ака мĕн килсе тухат, —тенĕ Ленин,—рабочи ĕç кунĕн çуррине **сахалтарах пайне** хăй валљи, **нумайрах пайне** капиталис валљи ĕçлет“.

Российă пролетариачĕ высăлă-тутăлă пурăнса, ĕçсĕрлĕхрен асап курса, хресченсемпе пĕрле варçă йăвăрлăхне тÿссе пурăннипе пĕрлех, кĕрешекен, вĕçне çитиччен револђуцилĕ клас пулнă, вăл пĕтĕм пусмăрта тăракансемпе пĕтĕм ĕç çыннисем тивĕçлипе йышăннă руководител пулнă. Тискерле експлоатаци рабочисене организациленмеле, политикăл кĕрешÿвĕн аренине тухмала тунă. Çак кĕрешÿре çĕнтерме пролетариат класлă пĕрлешÿпе ĕçĕн аслă формине, хăйĕн малта пыракан отрйадне—хăйĕн ленинла-сталинла бољшевикла партине тунă. Хăйулă, теорипе хĕçпăшалланнă, хурăç пек çирĕп, унччен нихăçан пулман пĕтĕçÿлĕ дисциплинăлă парти—пролетариатăн çĕнтерÿ ирĕкне пĕтĕçтерсе тăракан чĕрĕ вăй пулнă.

Бољшевикла парти йертсе пынипе Совет Сойузĕ пур ĕçсенче те пысăк çĕнтерÿсем кĕрешсе илчĕ. Анчах та иртнĕ çулсем хушшинче тунă чи пысăк та тĕлĕнмеле итог вăл—пирĕн çĕршыври классем хушшинче пулнă улшăну. Пирĕн çĕршывра пур експлоататăрла классене: улпутсене, банкирсене, фабрикантсене, сават хуçисене, кулаксене, купцасене, спекуљантсене пĕтерне. Пирĕн çĕршыври халăх халĕ пĕтĕмпех ĕçсынни класĕсенчен тăрат.

Совет влаçне кĕрешсе илсе тĕреклетнĕ хыççăн, пирĕн çĕршыври рабочи клас пролетари пулма пăрахрĕ. Пролетариат вăл—производствă хатĕрĕсемсĕр тăрса йулнă, капиталиссем експлоатацилекен клас. Пролетарисем вĕсем—тара кĕрешнĕ рабочисемпе служащисем, хăйсен ĕç вăйне сутакан, капиталиссене пуйанлатакан, хуçа ирĕкĕпе урама тухса ÿкме пултаракан çынсем. Пирĕн çĕршывра, паллă ĕнтĕ, капиталиссене пĕтерне, производствă хатĕрĕсем социалисăмлă харпăрлăхра тăраççĕ. Çакă вăл çынна çын експлоатацилессине пĕтĕмпех пĕтерет.

Социалисăмла Аслă револђуци пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри вăл, Совет Сойузĕнчи рабочи клас кĕрешсе илнĕ тĕп тивлетсенчен пĕри вăл—ĕçсĕрлĕхе пĕтерни пулат. Ĕçсĕрлĕхсен çарĕ — шанчăкă сухатса ĕç шыраса çÿрекен, çÿп-çап йешчĕкĕсенче çимелисем шыраса çÿрекен, хăрăк-харăк лаç пек пÿртсенче пурăнакан „ытлашши çынсем“—çакăн пек капиталисăмăн хăйĕнчен йулми йулташĕ. Ĕçсĕрлĕхрен,—тенĕ Сталин, — ĕçсĕр йулнă рабочисем çеç асап курмаççĕ, ĕç пур рабочисем те асап кураççĕ. Асап кураççĕ, мĕншĕн тесен, ĕçсĕр рабочисем нумай пулни вĕсен производстварi пурнăçне шанчăксăра кăларат, ырăнхи кунăн шанăçсăр тăват. Социалисăм пирĕн çĕршыври рабочи класа ĕçсĕрлĕхĕн асапĕнчен хăтарчĕ, вăл ăна ĕçлев прави пачĕ. 1930 çулта Совет Сойузĕнче ĕçсĕрлĕхе пĕтĕмпех тата йаланлăхах пĕтерне.

Йаланлăхах! Мĕншĕн тесен Совет Сойузĕнче ĕçсĕрлĕхĕн çăлкуçне— економикăлă кризиссем тăвакан, çук пурнăçпа пауперисăм кÿрекен капиталисăм йĕркине пĕтерне. Российăра 30 мĕлйун чухăн хресчен ĕçсĕррисен курăнми çарĕ пулнă. Выçă ларакан йал хулана ĕç шырама хăйĕн телейсĕр ывăлĕсене ĕç шырама хулана хăвалană, анчах хулинче хăйĕнче те ниçта вырăн тупайман ĕç вăйĕ ытлăн-çитлĕн пулнă. Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче те, социалисăмла индустрипе колхоз стройĕ çĕнтеричченех, сахал пулсан та, хулара — ĕçсĕрлĕх, йалта чухăнлăх пулнă. Сталинла пйатилеткăсем ĕçсĕрлĕхе те, чухăнлăха та пĕтĕмпех пĕтерчĕç. Чухăн пулнисем тахçанах ĕнтĕ колхоза кĕнĕ, кунта вĕсен пурнăçĕ сахалтан та ĕлĕкхи вăтамсен хисепне çитрĕ.

Пирĕн çĕршыври рабочисем хăйсен диктатурине алла хĕçпăшал тытса хăйсен аллинче хăварнă хыççăн, пуçласа хăйсен пултарулăхне вăйлатса йама май илчĕç. Ĕçлев йăвăр çĕклемрен савăнăçлă, хăйне валљи, совет общĕствине валљи тăвамлă ĕç пулса тăчĕ, вăл хисеплĕх ĕçĕ пулчĕ. Ĕçлев çĕкленевĕн пирвайхи хĕлхемĕсем сталинла пйатилеткăн çулĕсенче социалисăмла ăмăртăвăн аслă çулăмĕсем пулса тăчĕç. Çĕршыв çĕршер пин герой-стахановцăсен, техникăри хăйулă новатăрсен йатне пĕлчĕ. Стахановцăсем хăйсен ĕçĕпе, хăйсен ÿсĕмĕпе—рабочи класăн техникăлă пысăк çĕкленĕвĕ пуçланнине кăтартрĕç, çак çĕкленÿ ăс-тăн ĕçĕпе ал ĕçĕ хушшинчи хирĕçÿсен никĕсне пĕтерет.

Совет çĕршывĕнчи рабочи клас, бољшевиксен партийĕ йертсе пынипе, историлĕ кĕске вăхăтрах хăйĕн социалисăмла тăван çĕршывне çĕнетсе йачĕ. Промышлĕнăç продукцийĕ 1936 çулта вăрçăччен хисеппе танлаштарсан 7,3 хут ÿсрĕ. Çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланса пирĕн рабочи револђуциччен хинчен виçĕ хут ытларах тухăçлă ĕçлекен пулчĕ.

Хуçалăхпа куљтурă строителĕствинче тунă пысăк çитĕнÿсем рабочи класăн йышне ÿстерме, унăн авторитетне тĕреклетме май пачĕç. 1913 çулта Российăра рабочисемпе служăщисем пĕтĕмпе те 11,4 мĕлйун çын анчах пулнă. 1936 ç. Совет Сойузĕнче рабочисемпе служăщисен хисепĕ 25,8 мĕлйун шутланат. Патша Российĕнче пролетарисемпе вĕсен çемйисен хисепĕ пĕтĕм халăх хисепĕнче 16,7 процент пулнă. Халĕ халăх хисепĕнче рабочи клас 34,7 процент йышăнат. Çак цыфăрсем вĕсем пирĕн çĕршывра рабочи клас питех те пысăк вăй пулса тăни çинчен калаççĕ.

Социалисăмла револђуцин пысăк çитĕнĕвĕсене пирĕнтен тăшмансем, троцкисла-бухаринла сăтăрçăсем, фашисăм тарçисем тытса илме пăхрĕç. Анчах çак çĕлен-калтасем йăнăшрĕç: Совет çĕршывĕ кĕрешсе илнисем вĕсем пĕтĕм ĕçсыннисен, чăн малтан, Ленинпа Сталин партийĕ йертсе пыракан рабочи класăн çирĕп аллинче тăраççĕ. Тăшмансем пирĕн çĕршыври ирĕке тухнă рабочисене капиталисăм кĕтĕвне хăваласа кĕртме тăнинчен нимĕн те тухмарĕ, тухма та пултараймаст.

Çитес вăхăтсенче Совет çĕршывĕнчи 26 мĕлйунлă рабочи клас пĕтĕм ĕçсыннисен пуçне тăрса, хăйсен крĕклĕхне кăтартма, хамăр çĕршыва малашне те коммунисăм çулĕпе илсе пырас хисеплĕ задачăна тăвасса шанма тивĕçлĕ лайăх çынсене суйлама, урнăсем патне пырат. Коммуниссен партийĕ йертсе, вĕрентсе пыракан рабочи клас суйлавсем патне пĕтĕм совет общĕствин тивĕçлĕ руководителĕ пулса пырат.

(„Правда“ умстатйи).

—✶o✪o✶—

Вайан-Кутÿрйе вилнĕ

Парижрен пĕлтерне тăрăх, октябĕрĕн 10-мĕшĕнче, каçхине, Вайан-Кутÿрйе вилнĕ. Вайан-Кутÿрйе францири коммуниссен партин тата халăх фрончĕн паллă деятелĕ, Франци парламентĕнчи коммунис-депутат, револђуцилĕ паллă писател, Францири коммуниссен партин тĕп органĕн—„Юманите“ хаçатăн аслă редакторĕ пулнă.

(ТАСС).

—o—

Испанири пăлхавçăсен тылĕнче

Парижрен (Франци) пĕлтереççĕ: — Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Испанин кăнтăр йенчи, пăлхавçăсем тытса илнĕ çĕрти, районĕсенче пурăнакан халăх çимели çук пирки хурлăх курат. Кăмрăк тата газ (çунакании) пит сахал пирки, çынсем хăйсен хватерĕсенче сĕтел-пукан таврашсене çунтарса пĕтереççĕ.

(ТАСС).

Икĕ агитатăр

ТРАК. Мартынкинäри „Красный Восток“ колхозри „Çитĕнÿ“ стена хаçачĕн редакторĕ тата вулав сурчĕн пуçлăхĕ Иван Терентйĕв 3-мĕш тата 4-мĕш бригадăсенче суйлав Положенийĕ çинчен вĕрентет. Вăл агитатăр йатне илнĕ.

Заньатисене малтан хатĕрленсе пырат. Кружока çÿрекенсем пухăнса çитиччен вуласа пама илемлĕ литературă кĕнекисем, хаçатсем илсе тухат. Йаланах заньати ирттерме пынă чухне ун çумĕнче Фурмăнăвăн „Чапайĕв“ тата Шолăхăвăн „Уçнă çерем“ кĕнекисене куратăн.

Агитатăр кружока пырсан суйлав Положенин хальь вĕренмели статйисене вуласа ун çинче уйрăмăн чарăнса тăрат. Ыйтусем парат. Тепĕр чухне кружокра вĕренекенсем йенчен ăнланман, йăвăр ыйтусем тупăнсан, вĕсене паллă туса илсе, тепĕр заньатиччен учителсенчен, коммуниссенчен ыйтса пĕлсе пырат.

Вĕренекенсене ăнланма çăмăлтарах пултăр тесе, урăх Сойузлă республикăсем тата йут çĕршывсем çинчен калаçнă чухне кăтартса пама карттă илсе тухат, суйлав йĕркисене схемăсем çинче кăтартат. Унăн кружокĕнче виççĕмĕш бригадăран 37 çын, тăваттăмĕш бригадăран 31 çын вĕренет.

Борис Федăрăв Итмар йалĕнчен. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ, агитатăр. Унăн кружок заньатийĕ ернере пĕрре план тăрăх пулса иртет. Планра хăш заньатире мĕнле темă сÿтсе-йавассине тата вăл заньатисенче мĕнле литературăсемпе усă курма кирлине кăтартнă.

Кружокра заньати пуçлансан суйлав Положенин пĕр главине вуласа тухаççĕ. Кашни статйи çинче уйрăмăн чарăнса тăраççĕ. Кайран кружокра вĕренекенсем тухса калаçма тытăнаççĕ, хăйсем мĕн ăнланни çинчен калаççĕ.

Гаврил Михайлăв, 65 çула çитнĕскер, активлă тухса калаçат. Аслă Совета хуппăн (вăрттăн) сасăпа кама суйлама кирлине калат. Пĕр ыйтусăр, тухса калаçмасăр пĕр заньати те иртмест.

Ив. Моççейĕв.

58,7 проц. кăна йавăçтарнă

КÿКЕÇ. Кошкă йалĕнче „ССРС Аслă Советне суйламали Положенине“ икĕ кружокра вĕренеççĕ. Пĕр кружокĕнче 38 колхозник, тепринче 36 колхозницă. Кружоксене суйлавçăсене 58,7 проц. йавăçтарнă.

Кружоксем кашни кунах ылмашса ĕçлеççĕ. Çапла ĕçлени арçынсене килти ĕçсене тума, çав хушăрах ача-пăчасене пăхма хăварса, хĕрарăмсене заньатисене çÿреме аван.

Заньатисене программăпа туса пыраççĕ. Арçынсемпе 4, хĕрарăмсемпе 3 темă вĕреннĕ. Пурĕ 9 заньати туса иртернĕ.

Калаçусене Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн Чăвашсоветĕнче ĕçлекенсем тата Кошкăри колхоз председателĕ Хабаров йулташ туса пыраççĕ. Кружоксене ВТС Чăвашсовечĕн председателĕ Кочанăв йулташ йертсе пырат.

Ф. Тимофейĕв.

Хула совечĕ халăха суйлав Положенине вĕрентессипе интересленмест

СĔНТĔРВĂРРИ. Сталинла Конституципе „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕренме Сĕнтĕрвăрри хулинче пурĕ 57 кружок организациленĕ. Çĕвĕ çĕлекен, атă-пушмак çĕлекен ертелсенчи кружоксем аван ĕçлеççĕ. Заньатисенче суйлав Положенине пĕр сыпăк хыççăн теприне вĕренсе пыраççĕ. Анчах кунашкал кружоксем вара питех те сахал. Йалхуçалăх техникумĕпе спирт савăтĕнчи кружоксенче заньатисем йĕркелĕ пулса иртмеççĕ. Ăнланман ыйтусем çинче сахал чарăнса тăраççĕ. Сутуилу организацинче ĕçлекенсем пĕр кружок çеç уçнă. Вăл та пулсан ăнаçлă ĕçлемест. Кружокра заньати пĕр хут çеç пулса иртнĕ, унта 30 çын пырас вырăнне 12 çын кăна пынă пулнă. Кружок руководителĕ Потапăв хăй ответлăхне туймаст.

Хула совечĕ çумĕнче кружока ытахальтен кăна уçнă. Заньатисене хула совет членĕсем пурте çÿремеççĕ.

— Кружока вĕренме çÿрекенсен спискине кăтартăр-ха?—тесен, хула совет председателĕ Саначин çапла ответлет:

— Хаљ спискине туман-ха, епĕр спискине тумасăрах вĕреннĕ.

Çапла ĕнтĕ хула советĕнче ĕçлекенсем суйлав Положенине хăйсем те йĕркелĕ вĕренме тытăнман та, хула ĕçхалăхне вĕрентме те шутламаççĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕсем хушшинче суйлав саккунĕпе паллаштаракансем никам та çук, вĕсем валльи кружоксем уçман.

Хулара хутла пĕлмен çынсем 8 çын пур. Вĕсене хутла вĕрентессе аса та илмеççĕ, суйлав саккунĕпе те паллаштармаççĕ.

В. Ваçилйĕв

М. И. КАЛИНИН

Рабочи клас ĕлĕк тата халĕ

Вырăс рабочи класĕн, Йевропăри рабочисемпе танлаштарсан, социалисăм ĕçĕшĕн кĕрешнĕ истори кĕске, анчах та вăл чаплă. Раççийăра капиталисăмла економикă аталанăвĕ рабочисен йухăмĕн аталанăвĕнчен майпентерех хăвăртлăхна пынă.

Çакăн пек пулни нумайах иртмен. Епĕ кунта савăтсенче ĕçсем ирхине 6 сехет те 30 минутра пуçланса каçхине 6 сехетре пĕтнĕ вăхăта анчах илтĕп, ун чухне кăнтăрлахи апата вăхăт сехет çур панă. Чылай хапрăксенче ĕç ирхине 5 сехетре пуçланса каçхине 8 сехетре пĕтнĕ, ирхи апатпа кăнтăрлахи апата 2 сехет вăхăт панă. Рабочисем пуринчен ытла барак йышши общежитисенче пурăннă.

Вăл вăхăтра савăт пуçлăхĕсем иртĕнинне хирĕç протестлесси чылай чухне организованнăй пулмай, час-часах вăл маçтăрсене хĕненине иртнĕ. Хăш чухне маçтăрсен пуçне михĕ тăхăнтарнă та, тачкă çине лартса савăт картишĕнчен илсе тухнă. Маçтăрсене хĕнекен çынсене рабочисем пусмăр йĕркипе маçтăрсен ашкăнчăкне хирĕç тăракан паттăрсем вырăнне хунă. Рабочисем пĕр çĕре пуçтăранакан общĕствăлă вырăнсем, пуринчен ытла, пивнойсем, трактирсем пулнă.

Рабочи пурнăçĕ питех те мĕскĕн, илемсĕр пулнă. Ĕç кунĕ халтан кăлармала пăрăм, хватерсем начар—çакăн пек пулнă вырăс рабочин пурнăç вичи. Рабочисен пĕтĕм пушă вăхăта трактирсенче, пивнойсенче, чайнăйсенче иртермеле пулнă. Рабочин ĕçукçи питех те сахал пулнă, вăл çемйене çити-çитми тăрантарса пурăнма та аран-аран çитнĕ. Мускаври Прохăрăв мануфактуринче ĕçукçи уйăхне вăтамран 20 тенкĕ те 50 пус пулнă. Ун чухне кашни предприйатире тенĕ пекех рабочисенчен мăшкăламали штраф йĕрки пулнă. Çав Прохорăв мануфактуринчех рабочисене çаксемшĕн штрафланă:

„йĕркесĕрлĕхшĕн“—50 пус,

хăй патĕнче кантур ирĕк памасăрах çынна çĕр выртарнăшĕн 50 пус,

айалти хапхаран кĕнĕшĕн—50 пус,

картишĕнчен тухнăшĕн 50 пус,

ир тăнăшĕн 50 пус.

Хăшпĕр турра питрех „ĕненекен“ фабрикантсем рабочисене „чиркĕве çÿременшĕн“ те штраф тÿлеттернĕ.

Маçтăрсем рабочисем çине патркархальнăй йĕрке чухнехи пекех пăхнă. Маçтăрсем патĕнче хăйсен йал çыннисем ĕçленĕ. Пĕтĕмпех пĕр йал çыннисем ĕçлесе тăракан маçтерскойсем те пулнă. Пĕр-пĕр çын йалтан ĕç шыраса килсен, ăна хăйсен йал çыннисем савăта йе маçтерскойне—маçтăра йапалан, йе укçан парне панипе кÿртнĕ. Маçтăр ĕçе вырнаçтарнăшĕн взйаткă илнĕ, хăш чухне тата лайăхрах ĕç тупса панăшĕн те укçа илнĕ.

Ĕлĕкхи вăхăтра пĕр-пĕр предприйатире ĕçлеме кĕрес пулсан, рабочин мĕн пек мăшкăл тÿссе иртермеле пулнине кăтартас тĕлĕшпе темĕн чухлех примерсем илме пулат. Епĕр кунта „Раççийăпа Америкăн резинă мануфактури“ савăт историнчен илнĕ пĕр пример çинче чарăнса тăрăпăр (халь хи „Красный треугольник“ савăт). Акă мĕнле илнĕ ун чухне ĕçе рабочисене çак савăтра:

„Ĕçе ернере икĕ хутчен: тунтикунпа кĕçнерникун илнĕ. Директăр çынсене панеҗ çумне йĕркипе тăратса тухат те, калле-малле уткаласа, кĕтÿре меçник выльăх суйласа илнĕ пек, тĕреклĕрех, çÿлĕрех, итлекентерех, çынна хисеплентерекенех çынсене суйлама пуçлат, ун хыçĕнче телохранител, аслă отметчик Франц, „Шуйттан“ тесе чĕннĕскер. Франц нимĕç, вăл вырăсла питĕ начар калаçнă, кăшкăрма анчах пĕлнĕ: „Сюда, дьяволе, туда, дьяволе“. Гейзе запискă парат, „дьяволе“ проходнойа йарат, унта вара маçтăр суйлама тытăнат“.

Ун чухнех, иртнĕ ĕмĕрĕн вĕçĕнче, рабочисем хушшинче рабочи класăн пурнăçне лайăхлатмали çулсем çинчен шухăшлакан çынсем тухма пуçланă. Капиталиссене хирĕç кĕрешÿ организацилĕрех, пĕтĕçÿлĕрех пулма пуçланă. Стачкăсемпе забастовкăсем рабочи йухăмĕн пĕтĕмĕшлĕ задачĕсемпе тĕп шухăшĕсене тĕлметĕл пула пуçланă. Рабочи клас капиталисăм йĕркине хирĕç пĕр килĕшмесĕр кĕрешнинчен Ленинпа Сталин партийĕ, коммуниссен партийĕ çуралса, ÿссе тĕрекленнĕ.

Октăберти Социалисăмла Аслă революци умĕнхи йулашки вунă çул хушшинче рабочи клас хăйĕн пурнăçне пăртаках лайăхлатнă: ĕçкунĕ чакнă, ĕçукçи ÿсни, рабочи класăн çÿлти пайĕ пăртак лайăхрах пурăнма май илнĕ; анчах, çакăнпа пĕрлех, рабочисен материаллă пурнăçĕ те шанчăксăртарах пулма пуçланă. Капиталисăм аталаннăçемĕн кризиссем хăвăртрах пула пуçланă. Кризис вăхăтĕнче рабочисене çĕршер пинĕн хапрăксемпе савăтсенчен кăларса йанă, савăт хапхисем умĕнче ĕçĕн запаслă çарĕ ытларах та ытларах нумайланнă.

Вырăс рабочийĕ ытларах та ытларах нимĕнсĕр тăрса йулнă пролетарийе тухса пынă. Вăл пайан ĕçлесе ыранхи кун мĕнле пулассине пĕлмен.

Совет патшалăхĕнчи рабочин пурнăçĕпе ĕçне патша Раççийĕнчи пурнăçĕпе тата ĕçĕпе танлаштарса пăхсан, епĕр вĕсем хушшинче калама çук пысăк уйрăмлăх пуррине куратпăр. Социалисăмла Аслă революци капиталиссемпе улпутсем пуçпулса тăнине пĕтерсе, Раççийăри рабочисен пурнăçĕпе ĕçĕн условийĕсене те тĕпренех улăштарчĕ. Рабочисен пурнăçĕнче пулнă чи кирлĕ улшăнусенчен пĕри тесе епĕ—пайанхи куна рабочи пуçĕ çинче дамаклов хĕçĕ çакăнса тăманни тесе шутлатăп, рабочи ыран ĕççĕр тăрса йулассинчен хăрамаст. Çамрăк рабочи, вăл çеç мар, вăтам рабочи те халĕ ĕлĕкхи вăхăтра пролетари ĕç çухатнă пирки мĕн пек кульаймала пулнипе тавçăрса илме пултараймаст. Аслă категорине кусна рабочисем те,—вĕсен ĕçукçи ытти рабочисенчен пысăкрах пулнă çеç мар, пурнăçĕ те шанчăклăрах пулнă,—вĕсем те кашни минутрах хăйсен ĕçне çухатма пултарасран сехĕрленсе пурăннă. Çакăн пек сехĕрленсе пурăнасси уйрăмăнах кризиссемпе депрессисен вăхăтĕнче ытларах пулнă.

Савăтра ĕçленĕ чухне рабочи, паллах, цесйатникпа та, маçтăрпа та, маçтерской начальникĕпе те сăмахпа хирĕçсе илет. Капиталисăмла производствă условийĕсенче маçтăрсемпе рабочисен интересĕсем йаланах пĕр-пĕрне хирĕçле пулнă. Маçтăр—хуçа прикашчикĕ—йапалана хăй хакне тăниччен йÿнерех тутарасшăн. Рабочи ытларах илесшĕн тăрăшат. Çакăн пирки вара йаланах хирĕçÿсем пулнă. Рабочи хăйне хăй тем пек йĕркелĕ тытас, маçтăра çилентерес мар тесе тăрăшнă пулсан та, вăл пурĕпĕрех хăйĕн кулленхи ĕçĕнче çак хирĕçÿсем патĕнчен иртме пултарайман. Кризис йе депресси килсе тухсан вара, рабочи çакăн пек хирĕçÿсем, маçтăрпа тытăçса илнисем пирки питех те шухăша кайат, вăл вара хăйне ĕçрен кăларса йарасса хăрасах кĕтет. Ĕçрен кăларса йарас хăрушлăх вăл рабочи класăн кашни минутрах пырса лекме пултаракан чăпăркка пулнă. Вăл рабочисене шухăша йанă, пур чухне те хатĕр пулма, пур чухне те маçтăр умĕнче сыхă пулма хăнăхтарнă, унăн хăйĕн кашни утăмне виçмеле пулнă. Çакăн пек пулнă патша Раççийĕнче, çакăн пекех халĕ те капиталисăмла патшалăхсенче. Пĕтĕмпех урăхла пирĕн патăрта, Совет Сойузĕнче. Кунта çынна çын експлоатацилесси çук, кунта ĕççĕрлĕхе пĕтĕмпех пĕтернĕ, кунта маçтăрăн та, рабочин те пĕр шухăш—мĕнле те пулсан социалисăмшăн лайăхрах ĕçлесси.

Рабочи хăйне хăй йаланхи рабочи вырăнне хуни, пĕр-пĕр предприйатире мĕнле те пулсан сăлтав пирки ĕç сахалтарах пулсан, ĕнĕ тепĕр савăта куçма пултаратăп тесе шанса тăни, манăн ĕç коллектива кирлĕ тесе ĕненни—çынна ирĕклĕн тыткалакан тăват, унăн ĕçри хастарлăхне вăйлатат, унăн хисеплĕхне хăпартат, рабочине пушă вăхăтра канма, савăнма, хăйĕн культурлăхне хăпартма, общĕствăлă политикăлă организацисенче ĕçлеме май парат.

Социалисăм строительстви ăнăçлăн пулса пынипе „Рабочипе колхозник ыранхи кунăшăн тулли шанăçлăх кăчĕç, хăйсен материаллă тата культурăлă пурнăçне ытларах та ытларах лайăхлатса пырасси—вĕсен ĕçĕн пахалăхĕпе хисеплĕхĕнчен килет. Совет Сойузĕнчи ĕççыннишĕн ĕççĕрлĕх, çук пурнăç, выçлăх хăратса тăрасси пĕтрĕ. Кашни рабочипе колхозник хăйĕн малашлăхĕ çине шанăçлăн та савăнăçлăн пăхат, ытларах та ытларах пĕлÿ тата культурă ыйтат“*).

Социалисăмла Аслă революци панă тивлет пирĕн пĕтĕм рабочи клас çине хăйĕн паллине хурат, унăн характерне улăштарат, капиталисăм вăхăтĕнче ыранхи куна шанмасăр, ĕненмесĕр тăнă çынна активлă оптимис тăват. Çакна епĕр вĕçĕмсĕр нумай примерсенче курма пултаратпăр.

Анчах пирĕн рабочин оптимисăмĕпе „вăтам американцă“ текен çыннăн оптимисăмĕ хушшинче пĕр пекки нимĕн те çук. Унти рабочи хăйĕн пурнăç планне фортуна çине шанса, пулма пултарайман ĕç çине шанса, кĕтмен телей çине шанса, ĕçсем ăнăçлăн килсе тухасси çине шанса тăват. Сакăн пек шутлани чылай чухне пурнăççăр йапала пулса тăни çинчен калама кирлĕ-ши, мĕншĕн тесен кун пек шутлани никĕсĕнче пулман йапалана ĕненни тăрат. Совет рабочийĕн оптимисăмĕ—никĕслĕ, пурнăçлă йапала. Мĕншĕн тесен, вăл совет стройĕн йĕркинчен тухса тăрат, вăл уйрăм рабочин лайăх пурнăçĕшĕн пĕтĕм коллектив, пĕтĕм рабочи клас интересленнинчен тухса тăрат. Çак оптимисăма ССР Сойузĕн Сталинла Конституцинче çирĕплетсе хунă: „ССР Сойузĕн гражданĕсен ĕçлев прави пур, урăхла каласан, хăйсен ĕçлевĕшĕн пысăкĕшне пахалăхне кура тÿленекен гарантиленĕ ĕç илес права пур“. Капиталисла патшалăхсенчи рабочин мĕнле оптимисăм пулма пултартăрха, туллимар, пĕчĕклетсе кăтартнă палăсем тăрăх та, 1936 ç. 32 буржуалă патшалăхра официаллă йĕркепе регистрациленĕ ĕççĕр рабочисем 20 мĕлйун çын ытла пулнă пулсан!

Социалисăмла Аслă революци вырăс рабочи класне тĕнчери чи кĕске ĕçкунĕ—7 сехетлĕ ĕçкунĕ кÿчĕ. Çакă вăл питĕ пысăк тивлет, вăл мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăни пирки пийенле те ÿстерсе калаймăп. Совет рабочийĕ производствăра 7 сехет ĕçлет пулсан, ăна вальи канма, сывăрма хăйне вальи тата общĕствă пурнăçĕ вальи тата 17 сехет пур. Çакă вăл рабочин хăйĕн культурлăхне хăпартма çителĕклĕ вăхăт пуррине пĕлтерет; унăн хăйĕн килйышĕнче пулма та вăхăт çителĕклĕ, унăн хăйĕн ачисене культурăлă пăхса ÿстерме те вăхăт çителĕклĕ. Çаксем пĕри те патша Раççийĕнчи рабочисен пулман. Çаксем вĕсем капиталисăмла патшалăхсенчи рабочисен те çук. Патша Раççийĕнчи рабочи ачисем, правилă пекех, никам пăхмасăр ÿснĕ, пушă вăхăта вĕсем рабочи кварталсенчи тасамар, тĕттĕм вырăнсенче иртернĕ, вĕсем хушшинчен уголовнăй преступниксем тухса пынă; пăртак ÿссенех, шкултан вĕренсе пĕтермесĕрех, вĕсем хапрăксемпе савăтсене ача йе вĕренекен пулса ĕçлеме кайнă. Патша Раççийĕнчи рабочисенчен виççĕ пайĕнчен пĕр пайĕ 12 çула çитиччен хапрăксемпе савăтсенче ĕçлеме пуçланă (вĕсенчен 10 проценчĕ хапрăксене ĕçлеме вунна çитиччен кайнă). Тепĕр виççĕмĕш пайĕ 12—14 çула çитсен ĕçлеме пуçланă. Йулашки виççĕмĕш пайĕ çеç 15 çула çитнĕ хыççăн ĕçлеме пуçланă*).

Çаксем пурте ĕмĕрлĕхех иртрĕç! 1937 çулта Совет Сойузĕнчи пуçламĕшпе вăтам шкулсенче 30 мĕлйун ача вĕренеççĕ. ССРС гражданинĕ хăйĕн ачисене вĕрентес тĕлĕшрен нимĕн шухăшсăр. Унăн ачисене вĕрентме тÿлевсĕр шкулсем пур. Ашшĕ-амăшĕсен хăйсен ачисене вĕрентме саккун тăрăх обйазательнă йамала. Кашни ачан малашнехи кун-çулĕ пĕтĕмпех унăн пултарулăхĕпе ăсталăхĕнчен килет.

Пирĕн çаксене укçа хисепне куçарса шутламаççĕ, вăл рабочи бюджетĕнче те тăмаст, çав вăхăтрах вăл патшалăх кăларакан расхутсем хушшинче чи пысăк статйа. Çакна каласан та çителĕклĕ: кивĕ Раççийăра вăтам шкулта вĕрентме ытлашши нумайах тÿлемеле пулман пек, анчах çапах та, пĕр ачана вĕрентме çулталăкне 250 тенкĕрен кайа тухман. Ун чухне квалификацилĕ рабочи те уйăхне 40—45 тенкĕрен ытла илеймен. Çакăнтан паллă ĕнтĕ, ун чухне мĕншĕн вăтам шкулсенче рабочи ачисем пулманпа пĕрех пулни.

Рабочисене чирлесен йе, ĕçлейми пулсан, çавăн пекех тата ватăлсан пулăшма страховани туни те социалисăмла революци панă тивлетсенчен пĕчиккийех мар. Мĕне пĕлтерет-ха вăл тÿлевсĕр медицинă пулăшăвĕ парасси? Епĕ квалификацилĕ рабочи пулнă, манăн ĕçукçи ытти рабочисен вăтам ĕçукçинчен ытларах пулнă. Пĕринче епĕ савăтра чирлерĕм, икĕ уйăх выртрăм, çав вăхăт хушшинче епĕ страхкассăран пурĕ те 15 тенкĕ кăна илнĕ. А вĕт манăн ĕçукçинчен страхованишĕн процент çÿрă тытса тăнă. Кун çумне тата тухтăра тÿленине, емел укçине хушăр—вара сире епĕ, квалификацилĕ рабочи, мĕнле хĕсĕклĕхе пырса тухни паллă пулат. Икĕ уйăх чирлесе выртни мана, ĕлĕкхи пек каласан пĕтĕмпех тасатса хăварчĕ.

Илĕпĕр ватăлсан йе ĕçлейми пулсан пулăшу парас ыйтăва. Çын çамрăк, вăйпитти чухне ку ыйту пирки интересленмест. Ĕлĕкхи Раççийăра çапла пулнă: квалификацилĕ рабочи начарах ĕçукçи илмен. Анчах вăл, акă, ватăлчĕ. Мĕн тумала? Вăл савăтра нумай вăхăт хушши ĕçленĕ пулсан, ăна савăт администрацийĕ шанчăклă чура тесе шутлат пулсан, вара ăна квалификацилĕ ĕçрен йе маçторскойри сторăжа, йе уборщика куçараççĕ. Çак виçене тарăн, паллах, унăн ĕçукçийĕ те чакат. Анчах çакăн пек „телейлисен“ хисепĕнче администраци куçĕ умĕнче шутлă çынсем кăна пулнă. Ваттисенчен нумайĕшĕн расчот илмеле пулнă. Капиталисшĕн пулсан, пурĕпĕрех, ĕçрен кăларса йанă рабочи, вăл ун патĕнче 30—40 çул ĕçлесе ăна пуйтарнă пулсан та, вăл мĕнле пурăнни, ăна шухăшлаттарман. Ĕçрен кăларса йанă хыççăн рабочин хăйĕн ватă пурнăçне йе, ачисем пăртаккăх кÿрнеклĕ пурăнаççĕ пулсан, ачисем пулăшнипе, йе мĕнле май килнĕ çапла пурăнса иртермеле пулнă.

Çакăн пек вăл ĕлĕкхи патша Раççийĕнче кăна пулман, çакăн пекех халĕ те пĕтĕм капиталисăм тĕнчинче. Капиталисăм мĕн чухлĕ вăйлăрах, çавăн чухлĕ рабочине савăтран часрах кăларса сирпĕтеççĕ, вăл експлоатацишĕн сахал услам паракан çын пулса тăрат. Акă ĕнтĕ сире ватăлсан рабочисене капиталисăм йепле пулăшни. Пĕтĕмпех урăхла пирĕн патăрта. Кашни тÿрĕ кăмăллă совет гражданинне саккун тăрăх хăйне тивĕç пенси парса пулăшаççĕ.

Паллах, капиталисăм тĕнчипе пирĕн çĕршыври çынсен психологийĕ те, çак фактсене май, пĕтĕмпех урăхла.

Чăнах та, пирĕн хушăра та хутрансем çакнашкал „ăслă“ çынсем тупăнаççĕ: пирĕн рабочи хватерне тата вăл тăранса пурăннине, сăмахран, Америкă рабочийĕ хватерĕпе тата вăл тăранса пурăннипе танлаштарсан, Америкăри рабочи аш ытларах çийет, унăн хватерĕ те лайăхрах тесе кăшкăраççĕ. Америкăри рабочи класăн вăй-питтирех пайĕ тепĕр чăнахах та, вырăс рабочийĕнчен ытларах шоколад çийет пулĕ, анчах та, кунта мисе шоколад çинине çеç шутламала мар, Совет Сойузĕнче рабочисемпе служащисене паракан пĕтĕм материаллă-культурăлă пулăшăва илес пулат: канмали çуртсем, санаторисем, ача пахчисем, ача йаслисем, йăвăр çын пирки, ача çуратнă пирки паракан отпускăсем. Кусем çумне тата савăтсенче ĕçлекен темĕн чухлĕ нумай театрпа музыкă организацийĕсене, тÿлевсĕр концертсене, екскурсисене т. ыт. те хушас пулат. Çаксене пурне те пĕрле илсен, епĕр ССР Сойузĕнчи рабочи класăн пурнăçĕ кирек хăш капиталисла патшалăхри рабочи клас пурнăçĕнчен те темиçе хут лайăхраххине куратпăр. Пирĕн театрсем туп-тулли тулса ларни вăл ăнсăртран мар. Мĕн çинчен калат ку? Вăл совет патшалăхĕнчи ĕçхалăх массин пурнăçĕ ытлăн-çитлĕн пулни çинчен, массăн культурăлă ыйтăвĕсем ÿсни çинчен калат. Çакă вăл пирĕн ĕçхалăх масси тĕнчери чи культурăлă халăх пулса пыни çинчен калат.

Çаксем пурте вĕсем Октăберти Социалисăмла Аслă революци çĕнтерĕвĕн результачĕсем. Çаксене пурне те рабочисене Совет влаçĕ пачĕ. Совет влаçĕ рабочи класа Совет Сойузĕнчи пĕтĕм пуйанлăхăн хуçи туса хучĕ. Материаллă тата культурăлă ĕçсенче тăвакан кашни пысăк çитĕнÿ вăл ĕçхалăх массин тивлечĕ пулса тăрат.

Капиталисăм мĕн чухлĕ вăйлăрах, çавăн чухлĕ рабочи чухăнтарах, пулăшусăртарах. Пирĕн çĕршыв мĕн чухлĕ хăватлăрах, пуйанрах, çавăн чухлĕ ĕçхалăх массин пурнăçĕ пуйантарах та культурăларах пулса пырат.

Акă мĕнре ĕнтĕ совет влаçĕн вăйĕ. Акă мĕн пачĕ ĕнтĕ Совет влаçĕ халăха. Акă мĕншĕн рабочи клас—Совет влаçне тăваканĕ, унăн организатăрĕ, унăн чăнчăн боецĕ пулса, хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе хăйĕн Аслă социалисăмлă тăван çĕршывне вичкĕн сыхлат, ăна хытă хÿтĕлет.

*ПСК(б)П XVII-мĕш сйесĕн резолюцийĕнчен.

*Сборник статистических сведений по Московской губернии“, отдел санитарной статистики, т. IV, часть 1-ая, стр.288.

Йалăн культурлăхĕ ÿсет

ВĂРНАР. Совет самани пуçланиччен Кăкшăм çамрăкĕсен мĕн пур „савăнăçĕ“ те урамра çуйăхса çÿренинче йе ĕçкĕсенче çеç пулнă. Çавăнпа та çамрăксем кăшт тупăннă укçасемпе ĕçнĕ, ним тума аптранипе тарăхса çуйăхнă, шавланă. Кунта паллах, куштăнсен ачисем малта тăнă. Уйрăмăнах Кăкшăм йалĕ карт вăййипе паллă пулнă. Кăкшăма картла выльăма сывăхри йалсенчен—Нурăсран, Мачамăшран, Чалăмран, Кÿлхĕринчен тата ыттисенчен те нумай çÿренĕ. Ерни-ернипе сывăрмасăр выльаса, укçисене пĕтернĕ хыççăн, кĕл пек шапшурă шуралса килĕсене саланнă. Çак вăййа пулах хăшпĕрисем çурт-йĕрĕсене, çимелли çăкăр-тăварне, тăхăнмалли тумне салатса пĕтернĕ, йулашкинчен вара пĕр çăвар çăкăр илесшĕн Курпун Шăнкăрч йе Унтри пуйансем патне хăйсен пĕрер утăм анисене кайса сутнă.

Хĕр ачасем йалтан ниçта тухмасăр пурăннă. Вĕсен пĕтĕм вăхăчĕ ĕçре иртнĕ. Хĕллесенче пĕрпĕрин патне ларма çÿренĕ. Çакă вĕсен хĕллехи пĕрремĕш савăнăçĕ пулнă. Унта та пулин ÿсĕр куштан каччăсем пынă, вĕсем хĕрсенчен мăшкăланă, макăртнă хĕрсене.

Хут пĕлекеннисем йалта мĕн пурĕ те 4—5 çын çеç пулнă. Пĕтĕм йал халăхĕ Краснов пуппа пуйан Курпун Шăнкăрчне пăхăнса пурăннă. Пухусенче вĕсем мĕн тăвас тенĕ çавна тунă. Халăх вĕсене хирĕçле чĕвме те хăранă.

Социалисăмла революци Кăкшăм хресченĕсене пуйан та культурăлă çул çине кăларчĕ. Чухăнпа вăтам хресчен хуçалăхĕсем пуппа кулак пусмăрĕ айĕнчен тухса, ирĕклĕ, колхозлă пурнăç турĕç. Вăл пурнăç Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе çеç пулма пултарчĕ.

Йал сăн-сăпачĕ кунран-кун улшăнса, çĕнелсе, культурланса пырат. Ĕлĕк пĕтĕм йалĕпе те хут пĕлекеннисем 4—5 çын кăна пулнă пулсан, халĕ кунта хут пĕлменни çук. Йалта пуçламĕш шкул пур. Унта çулсерен 60—70 ача вĕренет. Халăхăн искусствăри пултарулăхĕ те куллен ÿсет. Ĕлĕк пĕтĕм йалĕпе пĕр шăпăр пулнă пулсан, халĕ йалта—4 купăс, 5 скрипкă, 12 балалайкă. Çамрăк музыкантсем Октăберти Аслă революци уйавне хатĕрленнĕ май, йатарласах оркестр организациленĕ. Оркестр халĕ çĕнĕрен-çĕнĕ йурă-кĕвĕсем вĕренет.

Трахом чирĕнчен Кăкшăм йалĕ тĕпренех тасалчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Сталинла Конституцине сывă куçпа вулаççĕ.

Колхозăн хĕрÿлĕ ĕçне комсомолĕссем пуçарса пыраççĕ. Колхоз кăçал хăйĕн уйхирĕсенчен пысăк тупăш пухса илчĕ. Колхозниксем кашни ĕçкунĕ 10—12 килограм тĕш тырă тайассине шанаççĕ. Çак кунсенчех колхоз тупăшсене валеçме тытăнат.

Кăкшăм ĕççыннисем Аслă Совета суйлама тимлĕн хатĕрленеççĕ. Ку тĕлĕшпе колхозра йатарласа тунă 4 кружок ĕçлет. Кружока пур колхозниксем те пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ.

Хаваслăн та савăнăçлăн, тулли те пуйан пурнăçпа кĕтсе илет Кăкшăм йалĕ Аслă октăбĕр уйавне.

Ст. Улангай.

Çавалкассисем ĕçлес вырăнне шавлаççĕ

ВĂРНАР (хамăр корр). Çавалкасси йалсоветне кĕрекен виçĕ йалта суйлав саккунне вĕренмели тăхăр кружок ĕçлеççĕ, тесе ĕнентерчĕ пире йалсовет председателĕ Зайцĕв йулташ. Агитатăрсен шутне пĕтĕм учительсене йавăçтарни çинчен те каласа пачĕ. Суйлавçăсен спискине туса, суйлав комиссин членĕсене палăртса райĕçтăвкома тăратнă тесе пĕлтерчĕ. Çийелтен пăхсан суйлав саккунне вĕренесси, суйлава хатĕрленесси йĕркелĕ пырат темеле.

Тĕплĕрехех пăхсан ĕçлес вырăнне шавлани çеç палăрат. Çав йалсоветне кĕрекен Йулапăш колхоз председателĕпе калаçнă чухне, сăмах майĕпе çакнашкал ыйту пулчĕ: „ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ мисе палатăран тăрат?“ Антонăв „25 палатăран тăрат“, тесе ответлерĕ. Колхоз бригадирĕ Миронăв „3 палатăран çеç тăрат“, тесе Антонăвпа тавлашу кăларса йачĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Йулапăшри колхозниксем „пирĕн колхоз председателĕ хаçат-журнал вуламаст, ĕçет те колхозниксемпе вăрçат“, теççĕ.

Положенийе вĕренессине Çавалкасри „Çуттала“, Туçи Мăратри „Клевĕр“ колхозсенче те чăтма çук йапăх организациленĕ. Колхоз председателĕсем колхозниксене кружоксене çÿретессишĕн пĕре те тăрăшмаççĕ, хăйсем те вĕренмеççĕ. „Çуттала“ колхоз председателĕ Шышкин йулташ чылай ыйтусем çине ответ параймарĕ.

„Агитатăрсем çитмеççĕ, хуларан йараççĕ пулĕ те-ха“, тет йалсовет председателĕ Зайцĕв. Йалсенче коммуниссем, комсомолĕссем, учительсем, кĕçĕн вăтам шкултан вĕренсе тухнă колхозниксем темиçе вуншарăн шутланаççĕ. Йалсовечĕ çавсене пухса вĕсемпе усă курма пĕлмест. Уйăрнă агитатăрсемпе те семинарсем туса иртермеççĕ. Агитатăрсем пулса çамрăк учительсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене куллен пулăшу кирли çинчен калаççĕ. Анчах, кĕçĕн вăтам шкул директорĕ Афанаçйĕв коммунис агитатăрсен массине йертсе пырассипе çителĕклĕ ĕçлемест-ха.

Йалсоветĕнче икĕ суйлав участки пулмала. Икĕ участкăра икĕ суйлав комиссийĕ ĕçлемеле. Суйлав комиссин членĕсене палăртнă чухне йалсовечĕ çийелтен пăхнă. Çапла майпа Туçи Мăрат участкинчи суйлав комиссин членне йала тĕлĕшĕнчен пăсăлса колхозниксем хушшинче хăйĕн авторитетне çухатнă çын лекнĕ.

Суйлавçăсен спискине тунă чухне йалсовечĕ асăрхаманнипех спискăна судпа айăпланса сасă прависĕр йулнă хĕрарăм Оçипăвă Васса спекулянткă кĕрсе йулнă. Оçипăвăна халăх суйчĕ 5 çуллăха тĕрмене хупмала тунине йалсоветĕнче ĕçлекенсем аван пĕлнĕ, темшĕн спискăна кÿртеччен сасă правинчен пăрса хăварнипе интересленмен.

Йалсовечĕн финанс секцисĕр пуçне урăх нимĕнле секци те ĕçлемест. Культурă çекцинче 8 çын шутланса тăраççĕ. Анчах хăшне пĕрне йалсоветĕнче ĕçлекенсем спискă тăрăх çеç пĕлеççĕ. Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç пачах та çук. Учительсене спискă туса панă та, йалсовечĕ хăй çинчен ответлăха сирнĕ.

Йалсоветĕнче, колхоз правленинче ĕçлекен йулташсем агитатăрсем хуларан килессе кĕтсе ларни калама çук сийенлĕ шухăш.

Й. Воробйов.

Учительсем ку таранччен пĕр заньати те иртермен

ТРАК. Карай йалсовет президиумĕ „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ колхозниксене вĕрентес тесе колхозсенчи кашни бригадăрах кружоксем организацилерĕ. Йалсовечĕпе 14 кружок, кашни кружок çумне учительсене çирĕплетсе пачĕç, анчах та Е. Антонăвă, Ив. Андрейĕв, Владимирăв, Михайлăв учительсем тата вулав çурчĕн пуçлăхĕ Абрамăв ку таранчен те пĕр заньати иртермерĕç. Колхозниксем хăйсене суйлав Положени çинчен вĕрентме ыйтаççĕ. Ку асăннă учительсем йалсовечĕ каланине те итлесшĕн мар. Çак хушăрах Моисейĕв учитель заньатисене йаланах йĕркелĕ иртерсе пычĕ. Çакăн пирки те „Большевик“ колхозри 2-мĕш бригадăри колхозниксем суйлав Положенине аванах пĕлеççĕ. Николайĕв учитель те заньатисене йĕркелĕ иртерсе пырат.

И. Петров.

57 колхознике суйлавçăсен спискине кĕртмесĕр хăварнă

ЙЕТĔРНЕ. Ирçе йалсоветĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ ку тарана çитсе те вĕренме тытăнман. Йалсовет председателĕ Лукашов кружоксем уçма шутламаст, вăл кунĕн-çĕрĕн ĕçсе çÿрет. Суйлавçăсен спискине тунă чух, спискăна 57 колхознике кĕртмесĕр хăварнă.

Ник. Цветков.

Малта пыракансем пулăшаççĕ

КУСЛАВККА. Комбинатри каскалакан цехри рабочисем-стаханăвцăсем Пролетариле револљуци уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн, лайăх тĕслĕхсем пама пулнипе пĕрлех хăйсен умне нормăна тултарайман рабочисене стаханăвла ĕçлеме вĕрентес задачăна лартрĕç. Çакна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кашни пĕр-пĕрне ĕçпе пулăшма, вĕрентме пулчĕ.

Халĕ ку задачăна пурнăçа кĕртсе пыни ĕçре курăнчĕ. Халиччен нормăна тултарайман Л. Афанасйĕвă Октабĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса Комаровпа ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕ. Вĕсем нормăна 125 процентран кайа мар тултарма пулчĕç. Кăна вĕсем кĕске вăхăтрах пурнăçа кĕртрĕç. Халĕ Афанасйĕвă йулташ кулленхи нормăна 139 процент, Комаров йулташ 137 процент тултараççĕ.

Вĕсем тата та лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр, теççĕ. Анчах цехра çитменлĕхсем пулни чăрмантарат. Ку çитменлĕхсем цехри механик Кочетков тимлесе ĕçлеменнипе пулаççĕ. Кочетков станоксене вăхăтра тата лайăххăн йусаттарса тăман, пирки час-часах ĕçлемесĕр тăма тивет.

Цехри стаханăвцăсем Октабĕр уйавне пысăк ӳсĕмсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Ку кĕрешӳре нормăна 184 процент тултаракан Варламăв, 170 процент тултаракан Козин, 168 процент тултаракан Соловйовă, 184 процент тултаракан Петров йулташсем малта пыраççĕ.

П. В. Йаичникăв.

Колхоз кадăрĕсем

СĔНТĔРВĂРРИ. Кăçал еçуркунне Шĕнерпуç йалĕнче ĕçлекен районри колхоз шкулĕнчен колхозсем валљи 11 ремонтор, 21 счетовод вĕренсе тухрĕç. Çентабĕр уйăхĕнчен пуçласа, колхоз шкулĕн ремонторсен уйрăмне çĕнĕрен 12 çын, счетоводсен уйрăмне 23 çын, выљăх-чĕрлĕх фермисен пуçлăхĕсем пулма 12 çын вĕренме илнĕ. Ферма пуçлăхĕсен курсĕнче пурте хĕрарăмсем вĕренеççĕ.

В. Васильйĕв.

Кану прави

СĔНТĔРВĂРРИ. Елĕк патша саманинче курортсем, санаторисемпе канмали çуртсем ĕççыннисемшĕн пулман. Халĕ пирĕн социалисăмла çĕршывра пĕтĕм курортсем, санаторисем, канмали çуртсем халăх аллинче. Сталинла Конституци панă кану правипе пирĕн ĕççыннисем туллин усă кураççĕ. Акă, кăçал Сĕнтĕрвăрри районĕнчи учителсен союзĕнчен айакри курортсене Крымпа Кавказа—9 çын, Чуварлейри санаторине—7 çын, тата Илйинкăри, Шупашкар питĕнчи, Хусан патĕнчи кану çурчĕсене—31 çын кайса каннă. Атăл çинче ишсе çӳрекен кану çуртĕнче—5 çын, пионерсен лагерĕсенче—7 çын пулнă. Айакри екскурсисене 10 çын кайса çӳренĕ.

1937—38 çулхи вăрман хатĕрлевĕ

Стаханăвла йухăма çĕклемен

Йĕпреç вăрманпромхозĕ вăрман хатĕрлев тапхăрне хатĕрленес тĕлĕшпе питех те начар ĕçлет. Вăрманпромхоза кĕрекен участкăсем ĕç вăйĕ пухма колхозсемпе догăвăрсем тăвас ĕçе халĕ çеç пуçарнă. Чернореченски вăрман пункчĕ пĕтĕмпе те икĕ догăвăр çеç тунă. Вăрманти бараксене йусасси те йерипен пырат. Кăмакасене йусаса пĕтермен, шыв турттармали тата вĕретмели баксене хатĕрлесе çитермен. Шыв вĕретмелисем 10 штук çитмеççĕ, 21 çĕрте кăмакасем тумала.

Механизациленĕ çулсемпе механизăмсене йусасси те сӳрĕккĕн пырат. Участкăра пур 11 автомашинăран 3 машинăна халĕ те йусаса пĕтермен. 4 трактăртан 2 трактăрне халĕ çеç йусама тытăннă. Вăрман хатĕрлев тапхăрĕнче ку машинсемпе лайăххăн усă курас пулсан, халех унта ĕçлекен кадрсене хатĕрлемеле. Ку тĕлĕшпе вара никам та нимĕн те тумаст. Пайанхи куна илсен механик, слесăр, токăр тата вунă шофĕр çитмест. Çавăн пекех лучкăлă пăчкăсемпе ĕçлекенсене вĕрентесси те пысăк хăрушлăх умĕнче тăрат. Октабĕр уйăхĕнче лучкăлă пăчкăсемпе ĕçлеме вĕрентекен курç витĕр 200 çын вĕрентсе кăлармала пулсан, халĕ 16 çын çеç вĕренет.

Стаханăвла йухăм пĕр вырăнтах тăрат. Ку ĕнтĕ техникла вĕренӳ тата културăлă-массăлă ĕççене кирлĕ пек туса пыманни çинчен калат. Техникăна вĕренес тĕлĕшпе тракторисем хушшинче кружок организациленисĕр пуçне нимĕн те туман.

Йĕпреç вăрманпромхозĕ тата унти вăрманпункчĕсем çулран çул кайра сĕтĕрĕнсе пыни чи пирвай вăрманпромхоз руководстви халĕ те кивĕ йăласемпех ĕçленинчен, тимсĕрлĕх, политикăла суккăрлăх, йăвашчунлăх тыткăнне кĕрсе ӳкнинчен килнĕ. Вăрманпромхоз руководителĕсем йăвашчунлăхне пула аппарата тăшманла елементсем кĕрсе вырнаçнă. Вĕсем руководителсен политикăлă суккăрлăхĕпе усă курса сăтăрла ĕçсем туса пыраççĕ.

Вăрманпромхоз аппаратĕнче аслă бухгалтĕр пулса Улатăрти жандармă ывăлĕ пулнă Каљаканăв ĕçлет. Вăл аппаратра ĕçлекен чăвашсене ĕçрен кăларса йарассишĕн тăрăшат, вĕсене йурийех чăрмантарса пырат. Нумай пулмаст, счетовода кĕме Волкăв комсомолĕспа Иванов йулташсем ыйту панă. Каљаканăв вĕсене „есĕр чăвашсем“, тесе ĕçе илмен. Каљаканăв ĕçне пула аппаратра ĕçлекен 21 çын шутĕнче 2 чăваш çеç йулчĕç.

Ку çеç мар, Каљаканăв сăтăрлă ĕççем тăвакан çынсене хӳтĕлесе пурăнат. Буинскăри вăрман складĕнчи бухгалтĕр Блинов йаланах ӳсĕр çӳрет. Рабочисемпе вăрçат. Рабочисен укçисене хăйĕн кăсйине чикет. Блинов çинчен жалăбăсем парсан, Каљаканăв йаланах: Блинов сирĕнтен ăслăрах çын, — тесе ответленисĕр пуçне нимĕн те шарламаст.

Акă тата Чернореченскăри Рожков, Кармалинскăри Макарычĕв „Пĕррĕмĕш Май“ вăрманпунктĕнчи Абажурăв бухгалтĕрсем йаланах ӳсĕр çӳреççĕ. Абажурăв патшалăх вăрманне сутса пурăнат. 60 тоннă кăмрăка сутса илнĕ укçана хăй кăсйине чикнĕ.

Вăрманпромхозăн шпал çуракан мастерскойĕнче механик пулса ĕçлекен Курманинпа електротехник Осипенкă сăтăрла ĕççем туни пĕр хут çеç палăрман ĕнтĕ. Вĕсем сăтăрланине пула савăт виçĕ уйăх хушши чарăнса тăнă. Анчах вĕсем халĕ те савăтрах ĕçлеççĕ-ха. Ку савăтрах завхоз пулса ĕçлекен Шашкин учотпа отчот ĕçне пĕтĕмпех аркатса йанă.

Кунăшкал фактăсем темĕн чухлех илсе кăтартма пулат. Анчах вăрманпромхоз руководителĕсем вăл фактăсенчен хăйсене кирлĕ вывăд тăвас вырăнне, тăшманла ĕççем тăвакансене хăйсем хӳтĕлесе пыраççĕ. Вăрманпромхоз директăрĕ Солдатăв хăйне йăпăлтатакан çынсене хытă килĕштерет. Çавăнпа ĕнтĕ вăл патшалăх банкĕнчен жуликле ĕççем тунăшăн вунă çула тĕрмене хупмала тунă Бољшова хăй патĕнче ĕçлеттерет, сăтăрлă ĕççем тăвакан Гогин механикне премi парат, тата Козловпа Ивановăсене малти вырăна хурат.

Вăрман хатĕрлев тапхăрне пур йенчен те хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илес тесен вăхăта вăраха йамасăрах аппарата тăшманла елементсенчен тасатмала. Унсăрăн вăрман хатĕрлевĕ те ăнăçлăн пурнăçа кĕме пултараймаст.

И. Алексейĕв.

Хура çĕртме турĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Сĕнтĕрвăрри хулинчи Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз хура çĕртме тунă вырăнта ыраш тухăçлă пулнине курa, çитĕс çул ыраш акмали вырăна халь 12 гектар сухаласа хăварчĕ. Ăна кура Вафлайĕвăри Ç. П. Петров йачĕпе тăракан колхоз та 3 гектар çинче сăнамали хура çĕртме турĕ.

В. В.

Çыраннă хаçатсене илейместпĕр

Канашри почтă уйрăмĕ хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра тĕрĕс çитерессишĕн тăрăшмаст. Акă Сиккассинчи почтă уйрăмне илсен, канашрисем унта хаçат-журналсене нихăçан та çителĕклĕ йамаççĕ, йе тата пĕр тĕрлĕ хаçат вырăнне тепĕр тĕрлĕ хаçат йараççĕ. Октабĕрĕн 5-мĕшĕнче çапла „Чăваш Коммунĕ“ вырăнне „Красная Чувашия“ хаçат йарса панă. Ку ĕçшĕн чи малтан почтă уйрăмĕн пуçлăхĕ айăплă. Канашри почтă уйрăмĕнчи Кондратйĕв начаљник почтăри ĕççене тивĕçлипе йĕркелемен. Кун пирки ăна каласассăн, вăл вăрçса çеç пăрахат. Пĕррехинче Сиккасси почтă уйрăмĕн пуçлăхĕ Давыдăвă, хаçатсем мĕншĕн йĕркелĕ памастăр, тесе ыйтнă та, Кондратйĕв ăна усал сăмахсемпе вăрçса пăрахнă. Унганпа Давыдăвă Кондратйĕвпа калаçма та хăрат.

Кондратйĕвăн ку çеç мар. Вăл почтăпа çӳрекен лашана тем сăлтавпа памаст, ик-виç кун хаçатсăр лартат. Машинă сайра хутра çеç пырса çӳрет.

С. Семенăв.

Çамрăк стољаран çĕнтерĕвĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр). С. П. Петров йулташ йачĕпе тăракан комбинатра стољарсем пролетарле револљуци 20-çул тултаракан уйава çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Вавилăв, Иванов йулташсем çак йулашки вăхăтра нихçан туман çитĕнӳсем турĕç.

Октабĕрĕн 3-мĕшĕнче стољарсенчен Иван Николайĕв çĕнĕ рекорд турĕ. Вăл çак кун 40 штук сĕтел рамки çинĕ окладкă хурас вырăнне 83 штук хурса нормăна 209 процент тултарчĕ.

Николайĕв çамрăк, 19 çулта кăна. Хапрăк-савăт шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн виççĕмĕш çул ĕнтĕ стољар ĕçĕнче ĕçлет. Çав вăхăтрах каçхине вăтам шкула вĕренме çӳрет.

Октабĕр уйавĕччен Николайĕв тата çитĕнӳ тума обйазателствă илчĕ. Ĕçре Банникăвă йулташпа ăмăртса ĕçлет.

Анат Кипекри (Çĕрпӳ р.) пуçламĕш шкулăн çĕнĕ çурчĕ.
Степанăв фото-ӳкерчĕкĕ.

Чукунçул строителствинчи стаханăвла вунăкунлăх

Çĕрпӳпе Шупашкар районĕсем халĕ те начар ĕçлеççĕ

Октабĕрĕн 10-мĕшĕнчи ĕç итогĕсем хăвăртлăхсем начарланни çинчен калаççĕ. Ку кун пĕтĕмпе 77341 тенкĕлĕх ĕç туса плана 36 процент çеç тултарнă. Строителствăри участкăсенчен пĕри те хăйĕн кулленхи планне тултарман. Пĕррĕмĕш участкă 18,5 процент, 2-мĕш участкă 21,2 процент, 3-мĕш участкă 19,7 процент, 4-мĕш участкă 10,2 процент, 5-мĕш участкă 82,5 процент, 6-мĕш участкă 45,5 процент, 7-мĕш участкă 24,4 процент, 8-мĕш участкă 71,6 процент тата 9-мĕш участкă 11,7 процент çеç тултарнă. Рељсăсем пĕтĕмпе 9640 метр тăршĕ хывнă.

Кунăшкал пулни Çĕрпӳпе Шупашкар, Вăрнар тата Тăвай районĕсем строителствăна ĕç вăйĕ организацилес, строителствă руководителĕсем ĕç вăйне нумайлăха çирĕплетес тĕлĕшпе çавăрнусăр, тимсĕр ĕçлениннчен килсе тухат. Çаксене пула ĕнтĕ ĕçлекенсен хисепĕ ӳсес вырăнне чакса пырат. Октабĕрĕн 9-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчен çуранисем 375 çын, лашалисем 64 çын ĕçленĕ пулсан, 10-мĕшĕнче çуранисем 303 çын, лашаллисем 39 çын çеç ĕçленĕ. Çакнашкалах Çĕрпӳ районĕнчен пынă ĕçлекенсен хисепĕ те чылай чакнă. Вăрнар районĕ хăй çине илнĕ обйазателствăна ку тарана çитиччен 12 процент çеç тултарнă. Тăвай районĕ те Вăрнарсенчен мала кайайман.

Строителствăра лайăх ĕç тĕслĕхсем кăтартакан бригадăсемпе колхозсем те сахал мар. Акă 86-мĕш километăрти трубана тунă çĕрте ĕçлекен платниксен Скоробăв бригади хăйĕн нормине 204 процент тултарат. 51-мĕш километăрти кĕпере тунă çĕрти Алексейĕв бригади нормăна 200 процент тултарат. Шăхасан районĕнчи „Прожектор“ тата Калинин йачĕпе тăракан колхозсем хăйсен обйазателствисене тултарнă пулин те, чукун çул çинчен пĕр таталмасăр ĕçлеççĕ. Анчах вĕсен опытне пур çĕре те сарса, ыттисене те вĕсем пек ĕçлеме вĕрентессишĕн никам та тăрăшмаст. Строителствăри парти, профсойуз организацисем ку ĕç çине çийелтĕн кăна пăхаççĕ. Ĕçре чăрмантаракансене вăхăтра тăрă шыв çине кăларассине чăсса пыраççĕ.

Акă тата Хĕрлĕ Чутай районĕ хăйĕн обйазателствине 109 процент тултарнă. Ку районран килнĕ çынсем халĕ та ĕçлеççĕ. Ытти районсен Хĕрлĕ Чутайсем пек ĕçлеме условисем пулмани мĕн? Паллах, пулнă. Анчах районри руководителсем ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлени чăрмантарса пырат.

Стаханăвла вунăкунлăх октабĕрĕн 15-мĕшне çитиччен пырат. Çак вăхăтра чукунçула Октабĕр уйавĕ тĕлне туса пĕтерессине татса парасан ĕççене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитермеле. Кăна пурнăçа кĕртме пирĕн республикăн пур кирлĕ условисемпе майсем те çителĕклĕ. Кашни район, колхоз, колхозник, пĕтĕм чăваш ĕçхалăхĕ чукунçула срукра туса, срукра ĕçе йарса орденлă Чăваш республикĕн чысне çирĕп тытса тăрассишĕн кĕрешни кирлĕ.

Ĕçри йĕркесĕрлĕхсем

КАНАШ („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Канашпа Шупашкар хушшинче тăвакан чукунçул çинче Ухман йалĕ çывăхĕнчи çырмара 6 кун хушши хĕрӳ ĕç пычĕ. Вунă пине йахăн кубла метр тăпра купаласа çырмана пӳлсе лартрĕç. Çырмана пĕвеленипе чукунçул тумалли трассă ку тĕлте сыпăнса ларчĕ.

Инçетри районсенчен (Йĕпреç, Вăрмар Патăрйел районĕсенчен) килнĕ çынсемпе пĕрлех, Канаш районĕнчи çывăх колхозсенчен пынă колхозниксем те нумайĕшĕ чукунçул тунă çĕрте çĕр вырtса ĕçлерĕç. Васкаса ĕçлерĕç вĕсем. Канаш йенчен хурса пыракан рељсăсем ĕçлекенсене хуса çитсех тăни, вĕсене татах та хытă хыпалантарчĕ. „Паравоз пире ура кĕлинчен таптасах пырат, çул пама ыйтат“—теççĕ ĕçлекенсем çĕнĕ рељсăсем тăрăх пырса тăнă паравоз çине пăхса.

Октабĕрĕн 7-мĕшĕнче ку çырма урлă чукунçулĕ хывăнчĕ, рељсă каçса карĕ. Вĕт ĕнер-виçĕмкун çеçчĕ кунта халăх вĕллери хуртсем пек сĕрлеччĕ. Мĕн чухлĕ лав, мĕн чухлĕ çын! Ĕç пынă вырăн — пысăк мар. Чукунçул хывакан çырма урлăшĕ — 50 метр, чукунçул сарлакăшĕ—8 метр. Çак пĕчĕк çĕр лаптăкĕ çинче, хĕсĕк вырăнта кашни кун 500 йахăн лав ĕçленĕ. Кашни лав пуçнех 2-шер çын çуран ĕçленĕ. Лавсене çавăрăнкалама хĕн, чăкраш пулнă. Çавăн пек условисенче чăнах та тийенĕ лавсене пырса йăвалантарма пысăк хăнăху, ăсталăх кирлĕ, çирĕп йĕркелĕх кирлĕ, унсăрăн лав çынни лашипех чăнкă шырлана ывтăнма пултарат. Çакăн пек условисенче çулйĕр деçатникĕсен, техникĕсен, участкă начаљникĕн вĕрсе тăракан ĕç патĕнчен пĕр самантлăха та таталмала мар. Анчах мĕн куратпăр-ха епĕр?

Тӳрех калас пулат: çулйĕр работникĕсем ĕçе тивĕçлипе йĕркелеме тăрăшмаççĕ. Вăл уйрăмăнах октабĕрĕн 5-мĕшĕнче аван курăнчĕ. Участкăри маçтăр Донских кăнтăрлаччен таçта çухаласа çӳрерĕ. Ун вырăнне çул тунă çĕрте кăтартса тăраканĕ, ĕçе йертсе пыраканĕ никам та пулмарĕ. Ĕçлекенсем тăпрана кам мĕнле пĕлнĕ—çавăн пек, ăçта шутланă—çавăнта пыра-пыра тăкаççĕ. Лавсем пĕр-пĕрин çине тăрăнаççĕ, пĕр-пĕрне каçсĕрлеççĕ. Тăтăшах шав, кăшкăру. Никам çуккине кура, Канаш райком инструктăрĕ Васильйĕв „деçатник“ пулса тăчĕ. Вăл пĕр самантрах лавсем тем вăрăмĕш хур карти пек тăсăлса кайнă черете пĕтерсе лартрĕ. Çав хушăрах пирĕн пата (епĕр, Канаш райком секретарĕпе Майорăв йулташпа пĕрле, колхозниксемпе калаçса тăнă вăхăтра): „Есĕр маçтăра Донских йулташа курмарăр-и?“,—тесе 5—6 хут та пырса ыйтрĕç. Кăнтăрла иртсен, таçтан прораб Дашков персе çитрĕ. Вăл килни питех те сисĕмлĕ пулчĕ, ĕçе тытăннă тытăнманах: „Ăçта кĕретĕн, шуйттан, куçу курмаст-и сан, суккăр!“—тесе кăшкăра пуçларĕ. Пĕр сехет пек ĕçлерĕ те, пăрахса карĕ. Йĕрке кĕртесси мĕн пулмарĕ, çынсен кăмăлне кăна пăсса хăварчĕ.

Техник те, участкă начаљникĕ те вĕрсе тăракан ĕçрен айăккарах . сулăнма тăни пĕр çак тĕслĕхре кăна мар курăнат. Ĕçлеме пынă çынсене ĕç нормипе хакĕ çинчен ăнлантарса паман.

Участкă строймаçтăрĕ Донских тунă ĕççене йышăнмасăр тăрса колхозниксене тарăхтарат. Ĕçлекенсем хăйсен ĕçне йышăнтарасшăн кĕтеççĕ-кĕтеççĕ те, тепĕр чухне ахалех пăрахса кайаççĕ. Ĕçлени шута илмесĕрех пĕтни Канаш районĕнчи Асхва тата Пикшик колхозĕсенчи колхозниксен нумай пулнă. Вĕсене халĕ чукунçул тума чĕнсен: „Малтан ĕçлени те ахалех пĕтрĕ“,—тесе ответлеççĕ. Сухайкасси çыннисем: Иванов Порфирий, Петров Васильий, Максимова Йекатерина, Осипăва Александра, Йеромкин Алексей, Сергейĕва Надежда, Герасимăв Илйа çак участкăра виçĕ кун хушши (çентабĕрĕн 29-мĕшĕнче, 30-мĕшĕнче тата октабĕрĕн 1-мĕшĕнче) пĕр вĕçĕмсĕр ĕçленĕ. Çак 3 кун хушшинче тунă ĕçе йышăнтарас тесе вĕсем Донских йулташа шăп тăватă кун хушши шыраса çӳренĕ. Çавăн пек мăшкăлсем сайра хутра кăна мар пулаççĕ.

Чукунçул тунă çĕрте ĕçлекенсем валљи пĕр хаçат-журнал та çук. Çавăн пекех каннă вăхăтра тĕрлĕрен калаçусем туса иртерекенсене те тĕл пулма пулмаст.

Чукунçул тума пуçлани ĕнтĕ пĕр уйăх кăна мар. Анчах çапах та чукунçул тутаракан работниксем пайан куна çитсе те хăйсен ĕçне йĕркелеме, йертсе пыма вĕренсе çитмен-ха.

И. Алтын-Баш.

Кирлĕ таварсем çук

КӲКЕÇ. Тулик Хураски йалпевĕнче хĕллене кирлĕ таварсем кӳрсе килмен. Колхозниксем паљто, çăматă, шарф т. ыт. ыйтаççĕ. Анчах ыйтакан таварсем пĕри те çук, хăççан кӳрсе килессине те каламаççĕ.

Анаткас лавкинче колхозниксем валљи красин та пулсан тăратаймаççĕ.

Й. Васильйĕв.

Спасскăна паттăрăн штурмлани

15 çул кайала Уссурийск тайгисенче граждăн вăрçин йулашки çапăçăвĕсем пынă. Инçет-Хĕвелтухăç республикин револљуцилĕ халăх çарĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи шургвардейцăсен йулашки çирĕплĕхне—Спасскăна штурмланă. 1922 ç. октабĕрĕн 7—8—9-мĕшĕсенче пулнă çапăçура револљуцилĕ боецсем хăйсен паттăрлăхне кăтартнă, штурм хăй историне Царицăн, Орел, Перекоп, Волочайĕвкă патĕнче пулнă мухтавлă çапăçусемпе пĕр тан пулса кĕнĕ. Пĕтĕм халăх, ачасенчен пуçласа ваттисене çитиччен, пĕтĕм çĕршыв Спасскăн штурмлă каçĕсене асра тытат, çапăçури револљуцилĕ паттăрсем çинчен йурă йурлат.

1922 çулти Октабĕр уйăхĕ тĕлне граждăн вăрçи пур фронтсенче те чарăннă пулнă. Инçет-Хĕвелтухăçĕнче, Приморйĕре шургвардейцăсем Йапони пана хĕçпăшалпа тытăнса йулнă. Çав шургвардейцăсен йăвине Меркулăв пичĕшĕсен правителствиe текенни йертсе пынă. Ку вăл колчаксен, коппелăвсен, семенăвсен бандисен йулашкисем пулнă. Интервентсем хавхалантарнипе шургвардейцăсем хăйсен территорине сарма хăтланнă, 1921 çулăн вĕçĕнче „Мускав çине“ кайма тухса Хабаровск хулине те туртса илме пултарнă. Волочайĕвкă патĕнче паттăрăн çапăçнă чухне хĕрлисем Молчанăв çарне çапса аркатнă, Йапони империалисĕсем пулăшман пулсан, Меркулăвсен правителствине те çавăн чухнех пĕтермеле пулнă.

Интервентсем хăйсене Приморйĕре нумай пурăнма май килменнине пĕлнĕ. Чылай сăлтавсем пирки, вăл шутран тĕп вырăнта тăракансенчен пĕри—Америкăпа Йапони хирĕçӳвĕсем йăвăрланса çитни пулнă—вĕсен хăйсен çарĕсене Приморйĕрен илсе кайасси çинчен сăмах памала пулнă. Ку расра та, Йапони интервенчĕсем шургвардейцăсен виллине тепĕр хут чĕртме хăтланнă. Владивостокра Меркулăвсен правителствине хăваласа йанă. Çак ĕçке пӳтнă купцăсен правителстви вырăнне Колчак çарĕн главнокомандуйушчи тата çар министăрĕ пулнă анчах нимĕн тăрлавсăр Дитерихса лартнă. Йапони çар штабĕ черносотенла пуп таврашсенчи тата çавнашкал ытти монархиссенчен „земски-собор“ пухнă. Çакăн пек киревсĕр те чыссăр йапала Владивостокра ку таранччен нихçан та пулман. Çак контрреволљуционерсен шайкине Йапони штабĕ „Приморйĕри монархин правителне“ тата „земски войеводине“ Дитерихс генерала ларттарнă.

1922 çулти октабĕр уйăхĕнче Йапонин 8-мĕш çурран дивизийĕ хӳтленипе, çак „рат“ васкаса Хĕрлĕ çар çине тапăнма хатĕрленет. Пур аслă шкулсене те хупнă. Ирĕксĕрлесе мобилизацилеме, пурлăхсене туртса илме, халăх пурлăхне çаратма тытăннă. Çентабĕр уйăхĕ вĕçне „ратĕн“ 12 пин çынтан тăракан çар пулнă.

Шургвардейцăсен бандине çĕнĕрен организациленi, ăна Йапони империалисăмĕ хĕçпăшал, тумтир парса пулăшни—контрреволљуци хăйĕн хĕçпăшалне пăрахманнине кăтартнă.

Бољшевиксен партипе Инçет-Хĕвелтухăç республикин правителстви Инçет-Хĕвелтухăçĕнче шургвардейцăсен бандине çапса аркатас тĕлĕшне мĕн кирлĕ, çавсене пурне те тунă. Револљуцилĕ халăх çарне Хĕрлĕ Çар ретĕнчен боецсем, политработниксем парса çирĕплетнĕ. Револљуцилĕ халăх çарĕн ретне бољшевиксем темиçешер пин çын кĕнĕ. Молчанăв генерала Волочайĕвкă патĕнче çапса аркатнă хыççăн, Амур çывăхĕнче тăракан çара йĕркеленĕ. Ун чухнех Амур çывăхĕнче 2-мĕш дивизи тунă, унта Волочайĕвкăри 4-мĕш, Амурти 5-мĕш, Хабаровскăри 6-мĕш стрелковой полксем тата Троицко-Савск утлă çар полки кĕнĕ.

Пирĕн çарăн пурнăçĕ йăвăр пулнă пулин те, револљуцилĕ халăх çар пайĕсен кĕрешес, çапăçас пултарулăхĕ пĕрмайах ӳссе пынă. Револљуцилĕ халăх çарĕнче бољшевиксем политикăлă масăлă ĕçе лайăх туса пыни—боецсемпе командирсене питĕ çирĕплетнĕ, вĕсен тăшмана хирĕç кĕрешес хастарлăхне çĕкленĕ. Партизансен отрйачĕсене те парти работникĕсемпе командирсем парса çирĕплетнĕ. Унчухне шургвардейцăсемпе Йапони çарĕсен тылĕнче партизансен отрйачĕсем нумай пулнă, вĕсенче хуларипе йалти ĕççыннисем тăнă, шургвардейцăсене хирĕç паттăрăн çапăçнă.

Йапони правителстви хăйĕн çарне Инçет-Хĕвелтухăçĕнчен илсе тухасси çинчен ийуљ уйăхĕнчех пĕлтернĕ пулин те, августăн 18-мĕшĕнче çеç çара илсе тухасси çинчен приказ панă. Çак срука та тĕрлĕ сăлтавсемпе тăсса пынă.

Çак вăхăтра Дитерихс „ратĕ“ Спасск патĕнче пухăнма пуçланă, малта пыракан чаçĕсене Свийагино станцине кăларса тăратнă. Ку вăхăт тĕлне револљуцилĕ халăх çарĕн командованийĕ хушши тăрăх, Амур çывăхĕнчи çартан ударлă группă тунă, ăна дивизи начаљникĕ Йа. З. Покус йертсе пынă. Çав группăра пурĕ 8 пин штык, 3 пин хĕç, 30 тупă, 150 пулемет, 3 бронепойăс, 3 самољот пулнă. Дитерихс çарĕн вăйĕ те çакăнтан кайах пулман. Унăн çарĕнче 75 пулемет, 25 тупă тата темиçе бронепойăс пулнă. Ударлă группăн чукунçул тăрăх Никољск-Уссурийск çине тапăнмала, кавалерипе партизансен отрйачĕсен шургвардейцăсен тĕп вăйĕсене хупăрласа илсе, вĕсене Манчжури чиккипе Владивосток урлă чакасран картламала пулнă.

Шургвардейцăсемпе малтанхи çапăçу Имаковкă станци çавăхĕнче пулса иртнĕ. Ку çапăçура револљуцилĕ халăх çарĕн боецĕсем паттăр çапăçнă, шургвардейцăсен малта пыракан отрйадне çапса аркатнă, вĕсене кăнтăр йеннелле хăваласа йанă.

Октабĕрĕн 5—6-мĕшĕсенче, шуррисен позицийĕ патне ударнăй группăсен тĕп вăйĕсем пырса çитнĕ хыççăн, Духовск поççолки—разйесĕ — Свийагино станци патĕнче питĕ вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Дитерихс хăйĕн „ратне“ çирĕплетме Корнилăв çар училишчинче вĕренекенсене 4 батаљйон йанă, вĕсен 9 тупă пулнă. Ку вăл унăн çарĕн чечекĕ пулнă.

Çапăçу пĕр талăка йахăн пынă, часчасах икĕ йенчен те тытăçса илнисем пулнă. Октабĕрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çар чаçĕсем Свийагино станцине туртса илнĕ. Çак кунах Александровск, Бусейĕвкă йалĕсене туртса илнĕ. Пирĕн чаçсем Спасск патне наступлени туса пынă. Свийагино станци патĕнчи вăрçăра пирĕн çарсем шуррисен Корнилăв çар училишчине пĕтĕмĕшпех пĕтернĕ, 60 йупкĕра тыткăна илнĕ, кунтах 2 тупă, 12 пулемет туртса илнĕ. Шуррисен 2.000 боецран 200 боец пĕтнĕ.

Шуррисем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăксан, ударлă группă тăшман çарĕсене хĕссе пынă. Тăшман çарĕсем Спасск çирĕплетнĕ районĕнче пытанса, пирĕн çара хирĕç тăма васканă. Шуррисем Спасск районне питĕ хытă çирĕплетнĕ. Çак района Йапони çарĕсем 1921 çулта çĕнĕ йышшиk крепăç пек туса çирĕплетнĕ. Шуррисем çак района Хĕрлĕ Çар пырса тĕкĕнме пултараймаст тесе шутланă.

Октабĕрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ çар Спасск çине артиллеринчен пеме хатĕрленнĕ. Октабĕрĕн 8-мĕшĕнче ирхине ирех Спасск çине штурм пуçланнă. Чи малтан атакăна Хабаровскри 6-мĕш полк кайнă. Полк çулăмпа тĕтĕм виттĕр малала кайнă, каç пулнă тĕле хула çывăхне çитнĕ. Анчах та ăна малала кайма чарнă.

Каçхине атакă çапла малала пынă. Çав 6-мĕш полк 1-мĕш фронт çине атакă тунă. Анчах ирхинеччен ăнăçу пулман. Амурски 5-мĕш полк тата дивизи шкулĕн курсанчĕсен каçхи атаки çĕнтерӳ тунă, вĕсем 3-мĕш фронта туртса илнĕ, шуррисем хайар контратакă тунă пулсан та, вĕсем хăйсем çапăçса илнине никама та паман.

Октабĕрĕн 9-мĕшĕнче ирхине паттăр атакă çĕнĕрен пуçланнă. Артиллери çĕрле йĕркеленнĕ те, тăшман тăракан çĕнĕ вырăнсем çине пеме тытăннă. Татăклă вăхăт çитсе кĕнĕ: шуррисен укреплени системи пăсăлат, анчах Хĕрлĕ çарăн çапăçура вăй чылай пĕтнĕ. Çав вăхăтра вăрçа мухтавлă волочайевцăсем тухнă. Вĕсем питĕ хăвăрт тапăнса тăшманăн 5-мĕш фронтне туртса илнĕ, çак вăхăт тĕлне Амурски 5-мĕш полк Йевгенйевка станцине çавăрса илнĕ.

Çак штурмра народармейцăсем йумахри пек паттăр çапăçнă. Тăшманпа хирĕç-хирĕç штыкпа çапăçнă чухне боецсем темиçе çĕртен суранланнă, анчах вĕсем наступлени тума пăрахман. Пĕр ротă пахча умне выртнă, тăшмансем вĕçихĕррисĕр пулеметсенчен пенĕ. Çак ротăра пулнă партийцă-библиотекăр сиксе тăнă та, „ура!“ кăшкăрса атакăна кайнă. Ăна тăватă çĕртен пулĕ кĕрсе кайнă, вăл вилнĕ, анчах унăн мухтавлă примерĕ пĕтĕм ротăна хавхалантарнă ротă çав пахчана туртса илнĕ.

Спасскăра Молчанăв генерал штабне, Каппељ генерал йалавне, 2 артиллери батарейĕ, бронепойăс, 284 салтак тытса илнĕ. Çак вăрçăра тăшманăн пин çын таран вилсе, суранланса пĕтнĕ.

Паллă, наступлени тăвакансен сыхланакансенчен çухату нумайтарах пулат. Оборонă вăйне çĕмĕрес пулсан, наступлени тăваканĕн вăйĕ икĕ-виçĕ хут ытларах пулмала. Спасскăна паттăрăн штурмланă чухне çак „правилăна“ пăснă. Хĕрлĕ çар шуррисенчен нумайах пулман, анчах унăн вилнисемпе суранланнисем сахал пулнă.

Револљуцилĕ халăх çарĕн чаплă çĕнтерĕвĕ пĕтĕм Совет çĕршывĕ тăрăх йанраса кайнă. Спасскине илнĕ хыççăн, Приморйе патне каймалли çула уçнă. Дитерихс „ратне“ çапса аркатнă, Дитерихс генерал тухса тарнă. Монастырищче йалĕ патĕнче тытăнса тăма хăтланнă, анчах унта та ăна çĕмĕрсе тăкнă. Октабĕрĕн 16-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Никољск—Уссурийскăна илнĕ, октабĕрĕн 25-мĕшĕнче Владивосток хулине кĕнĕ.

Нихăçан манмала мар Спасскăри паттăр кунсем Ленинпа Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен ĕççыннисен револљуцилĕ çарĕн паттăрлăхне кăтартнă. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшнă. Интервентсене пĕтĕм халăх хăваласа кăларнă, шургвардейцăсене пĕтĕм халăх пĕтернĕ.

Китайри вăрçă

Шанхай фронтĕнче Шанхайран çурçĕр йенелле вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Йапонцăсем куççул йухтаракан газ йанипе çеç Ваңцзаопан каналĕн кăнтăр çыранне каçма пултарнă.

Çурçĕр Китайра йапонцăсем, Ша шывĕ урлă (Бейпин—Хаңкоу чукун çулĕ районĕнче) каçнă та, икĕ колоннăпа малала кайаççĕ. Пĕрремĕш колонни Чжендин хулине пырса кĕнĕ, иккĕмĕшĕ—Чжендин хулинчен хĕвеланăçнеле кайнă.

Шандун провинцин çурçĕр пайĕнче, Дечжоу хули районĕнче, вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Китай çарĕсем Тйаңцзин—Покоус чукун çулне (йапонцăсем ун тăрăх наступлени туса пыраççĕ) виçĕ çĕртен кайа мар татнă (Дечжоу хулинчен çурçĕр йенче).

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Китайра китайцăсен çарĕсен позицийĕсем ытла та вăрăм, çавăнпа вĕсем хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Китайцăсен çарĕсем, тĕрĕс шухăш тытса, йапонцăсен бомбардировщикĕсем ваљђи лайăх мишен пулса тăракан пысăк пунктсенчен тухса кайнă, халђ вĕсем хăвăрт çӳрекен пĕчĕк отрйадсем туса çапăçаççĕ. Йапонцăсен нумай колоннисене çавăрса илсе тĕп тунă. Китайцăсен Чжу-Де йертсе пыракан саккăрĕмĕш çарĕ Шаңси провинцин çурçĕр пайĕнче уйрăмах пысăк çитĕнӳсем тунă.

Кăнтăр Китайра йапонцăсен тинĕс çинче вĕçмели самолђочĕсем октаберĕн саккăрăмĕшĕнче икĕ хут Кантон çине тата унăн хĕрринчи вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă. 600 пин çын, вăл Кантон хулинчи халăхăн çурри пулаť, хула çине пĕрмайах бомбăсем пăрахнă пирки хуларан тухса кайнă.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăç (Арагони) фронтĕнче, Сарагосă хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăç йенчи районра республиканцăсен çарĕсем фашиссен позицийĕсем çине хытă тапăнаççĕ. Республиканцăсем Хака хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăç йенче те малала кайнă.

Çурçĕр фрончĕн хĕвелтухăç йенчи пайĕнче 430 текен высота айăккисенче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Республиканцăсен авиацийĕ фашиссен тылĕнчи йалсем çине вут хыптаракан бомбăсем пăрахнă. Çак фронтăн кăнтăр йенчи пайĕнче республиканцăсен çарĕсем Пенйабуган йалĕ çине атакă тунă, вĕсем темиçе сăрт тытса илнĕ, фашиссене туйăнтармалах сухатусем тутарнă. Октаберĕн 9-мĕшĕнче Çурçĕр фронтĕнче фашиссен пĕр истребителĕне персе ӳкернĕ.

Центрти фронтра (Мадрид фрончĕ) Карабанчел районĕнче (Мадридран кăнтăр йенче) республиканцăсем малала кайса, фашиссен аллинче пулнă тăвата çурта тытса илнĕ.

(ТАСС).

Фашисла Итали сĕмсĕрленсех Италири интервенцийĕ сарса пыраť

Октаберĕн пĕрремĕшĕнче Англипе Франци правителствисем пĕрле Итали правителстви патне нотă (çырнă зайавлени) йанă. Çав нотăра Итали правителствине, çарсене Испанирен илсе кайас ыйтува сӳтсе-йавма, Англи, Франци тата Итали представителĕсене чĕнсе совещани пухма сĕннĕ.

Итали правителстви çав нотă çине октаберĕн 9-мĕшĕнче тин ответ панă. Англипе Франци сĕнӳне Итали йышăнмаť, çав ыйтува Лондăнри Комитетра (Испанири ĕçсене хутшăнас мар ыйтусене пăхакан комитет) сӳтсе-йавма сĕнет. Итали тата çакăн пек пĕлтернĕ: ыйтăва сӳтсе-йавас çĕре Германине хутшăнтармасан, Итали те хутшăнмаť, тенĕ.

Итали Англипе Францин сĕнӳвĕ пирки панă ответран çакă курăнаť: Итали, ним тухăссăр дипломатилĕ дискуссии тунипе вăхăта тăсса, Испанине çаплах çар йараť тата Испанири пăлхавçăсене пулăшма вăрçă хатĕрĕсем йарса параť. Англипе Франци агрессăрсене уступкăсем парас политика тытнă пирки, вăрçă вутне чĕртекен фашиссем хăйсен йут çĕрсене тытса илес планĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе сĕмсĕрленсех, усалллансах пыраççĕ.

Итали Англипе Францин ноти пирки ответ панă май, Германи пичечĕ—Испани ыйтăвĕ тĕлĕшпе Испани хăйĕн политикине çаплипех хăвараť, Рим ответне „Берлинпа пĕтĕмĕшпех килĕшсе" панă, тесе çыраť.

(ТАСС).

Италире вĕлерекен йапаласем нумай туса кăлараççĕ

ВЕНА, октаберĕн 9-мĕш (ТАСС). Социал-демократсен „Травай" хаçачĕ Италире вĕлерекен йапаласене нумай туса кăларма пуçлани çинчен пĕлтерет. Хаçат кăтартнă тăрăх, Италин „Соњва" хапрăк-савăчĕсем, малтан ытларах содă тунăскерсем, халĕ пĕтĕмпех вĕлерекен, тата çунса сирпĕнсе кайакан йапаласем тума пуçланă. Хапрăк савăтсем талăкĕпех пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Рабочисене çар йĕркипе ĕçлеттереççĕ тата вĕсене уйрăмăнах хытă тишкĕрсе тăраççĕ.

К. Й. Ворошилов йулташ Мускава таврăннă

Октаберĕн 10-мĕшĕнче, Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн маршалĕ К. Й. Ворошилов йулташ хĕрлĕ йалавлă Балти флочĕн чаçĕсен тактикăлă вĕренӳвĕсенчен Мускава таврăннă.

(ТАСС).

Левенфишăн иккĕмĕш çĕнтерӳвĕ

ССР Союзĕнче шахмăтпа малти вырăна тухассипе пыракан матчăн Октаберĕн 9-мĕшĕнче урăх вăхăта хăварнă виççĕмĕш партине октаберĕн 10-мĕшĕнче выљђаса пĕтернĕ. 67 мĕш ходра Ботвинник парăннă.

Матчăн шучĕ 2:1 Левенфиша усăлă пулнă.

Октаберĕн 11-мĕшĕнче матчăн тăваттăмĕш партине выљђаççĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрçă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕсен инженерсен корпусĕн чаçĕ çырма урлă каçаť.

(Союзфото)

Германире массăсем фашисăм политикине хирĕç тăни ӳссе пыни тата террор вăйланни

ПРАГА, 10-Х (ТАСС). Германири ĕçсем çинчен лайăх пĕлсе тăракан хаçатсем, уйрăмăн илсен „Дейче фольксцейтунг" тата „Паризер тагесцейтунг" хаçатсем, Германире хуласенче те, йалсенче те массăсем, çимелисем тĕлĕшпе йăвăрлăхсем çивĕчленнĕ пирки пушших те, фашисăм политикине хирĕç тăни ӳссе пыни çинчен фактсем нумай пичетлеççĕ.

Рейн облăçĕнчи пĕр хулара килхуçи хĕрарăмсем апат-çимĕç магазинĕ умĕнче, çу пама ыйтса, тăвăллă демонстраци тунă. Çу запасне штурмовиксене ваљђи парса тăраççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕсем штурмовиксене ылханса кăшкăрнă: „Вăрçă çулĕсене аса илтерекен вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. Пирĕн çимели нимĕн те çук, а çав мародĕрсем халăхăнне çу вăрлаççĕ", тенĕ. Времен хулинче фашиссен политикине тарăхса кайнă халăх ушкăнĕ фашиссен вырăнти организацин руководителне тытса хĕненĕ. Германи Силезинчи хуласенче çуртсен стенисем çине—халăха, уйрăмах ача амăшĕсене тата ачасене çу пама ыйтса, плакатсем çапнă.

Çурçĕр Германири пĕр казармăра, салтаксем хирĕç тăнипе, фашиссен хаçачĕсем Испанири ĕçсем çинчен çыракан обзорсене вуласа кăтартассине пăрахăç тумала килнĕ. Фашиссен хаçачĕсем çав обзорсенче уççăнах суйса çыраççĕ.

Йышлă массăсем фашиссен политикине хирĕç тăни ӳснĕ май, фашисла террор вăйланни палăраť. Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Германире 1936 çулта пурĕ 442 913 çынна судпа айăпланă, вăл шутран 50 пин çынна фашиссен влаçĕсен распорйаженийĕсене итлеменшĕн тата 46. 847 çынна—„патшалăх изменишĕн" айăпланă. 1937 çулта, уйрăмах йулашки вăхăтра, пĕтĕм Германире фашисла террор нумай вăйланни палăраť. Çапла, Веддинграх (Берлинăн рабочисем пурнакан районĕ) йулашки вăхăтра ик çĕр çын тытса хупнă.

Шахťорсен сђочĕ йачĕпе çĕркăмрăкне планран ытлашши кăлараççĕ

Малта пыракан горђаксем Йăвăр промышлĕннăçăн Сталинла Наркомĕ Л. М. Каганович йулташ пынине тата Донбасри пĕтĕм стаханăвцăсен тата ударник шахťорсен сђотне çĕркăмрăкне планран ытлашши пана обйазателство паççĕ.

„Орджоникидзеуголь" тресчĕн „Юный Коммунар" шахтинчи икĕ лайăх ĕçлекен участкă çĕркăмрăкĕ кăлармалли вунă уйăхлă плана срукченех тата ытлашши тултарнă. Участкă коллективĕсем Аслă социалисăмла револђуци 20 çул тултаракан уйав тĕлне планран ытлашши 6 пин тоннăшер çĕркăмрăкĕ пама обйазателствă панă.

„Сергоуголь" тресчĕн шахтисенче ĕçлекен рабочисем октаберĕн 8 мĕшĕнче нормăсене ытлашшипех тултарнă. 216 рабочи кашни икĕ нормă ытла панă. Челђускинцăсен йачĕпе тăракан шахтă, икĕ çул умлă-хыçлах заданисене пурнăçа кĕртейменскер, сђот пынă виçĕ кунĕнче те талăкри заданисене пĕрремĕш хут тултарса пынă.

(ТАСС).

Гектартан 20 центнер

Çĕрпелĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.) иртнĕ çуркунне 10 гектар çине махоркă лартса хăварчĕ. Махоркă патĕнче ĕçлеме уйрăм бригадă организацилесе, бригадирне Шишкина суйласа хăварчĕç. Шишкин хăйĕн бригади членĕсемпе вăхăтра шăварса, çумласа пычĕ, гектартан 20 центнер махоркă илчĕ.

Халĕ 10 гектар çинчи махоркăна пуçтарса йатарласа тунă сара йĕнче типĕтсе патшалăха кайса леçрĕç. Махоркă патĕнче уйрăмах хĕрарăмсем тăрăшса, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. И. Борисава, А. Гаврилова, Курицина, А. Ваçилйĕва, А. Матвейĕва кулленхи ĕç нормине 150 процент тултарса пычĕç.

А. И.

ТЕМТЕПĔР

46 метр çӳлĕш пушар пусми

Англире пушар пусми тунă, ăна йăлтах тăссан 46 метр çӳлĕш пулаť. Пусмана автомашинă çине çирĕплетсе лартнă, вăл 6 сыпăкран тăраť, кашни сыпăкĕ пĕр-пĕрин çине кĕрсе вырнаçаť. Пусмана пĕтĕмпех тăсса йама 30 секундă вăхăт кирлĕ. Пусман чи çӳлти сыпăкĕ ăшĕнче пушарник ваљђи площадкă тунă. Пушарник автомашинăпа çыхăну тытма площадкă çинче телефон пур.

Пусмапа усă курас ĕçе механизацилене, автомашинă щитки патĕнче лампăчкăсем пур, вĕсем пусма хăпарнипе анникне кăтартса тăраççĕ.

Вуткăварпа кĕрешме пусман çӳлти площадки çинче шыв ваљђи шланг тата карлăклă площадкă пур, вăл площадкă тăрăх çунакан çуртăн çӳлти хутлăхĕсенчен çынсем айала анма пултараççĕ.

Пĕтĕм установкăн йăвăрăшĕ—11 тоннă.

(„Енженеринг", Англи журналĕ).

* * *

4.016 çынна вилĕмрен çăлса хăварнă матрос

Мамед Молла Байрам Оглы Бедийа 1879 çулта пĕчиккĕлех Батумри шыва анса кайакансене хăтаракан станцине ĕçлеме кĕнĕ. Вăл çав станцăра 56 çул хушши матрос пулса ĕçлесе, шыва путма пуçланă 4.016 çынна вилĕмрен çăлса хăварнă. Мамед иртнĕ çулта тин ĕçрен тухнă. Грузи правителстви ăна ĕç геройĕ йатне тата персонађнăй пенси парса парнеленĕ.

Мамед халĕ 70 çулта, çапах та вăл çирĕп те вăйлă. Халĕ вăл часчасах тинĕс хĕрĕнче шыва кĕрекенсем çине пăхса лараť. Вăл шыва анса кайакан мĕн пулсан кашни минутрах пырса пулăшма хатĕр.

(„Курортная газета").

Радиофестивалĕн 10-мĕш кунĕ

Çĕрпӳ районĕ лайăх выступлени пачĕ

Фестивалĕн 10-мĕш кунĕнче Шăхасан, Тутаркас тата Çĕрпӳ районĕсем хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç. Кашни районăнах выступленийĕ хăйне йевĕрлĕ тата интереслĕ пулчĕ.

Шăхасан районĕнчи художествăлă пултарулăх, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, чылай малала кайнă. Иртнĕ çулти радиофестиваљре Шăхасан районĕн выступленийĕ чи начар выступлени пулнă пулсан, кăçалхи çул вăл начар мар выступлени пама пултарчĕ. Шăхасанти вăтам шкул хорĕ (Игнатйĕв йертсе пыраť) „Песня о Сталине" тата „Урожайная-плясовая" йурăсене пысăк çĕкленӳпе йурларĕ. Çиччĕмĕш класра вĕренекен Горбуновăпа Михайлăвă й-сем „Уж ты сад" йурра аван кăларчĕç. Çав шкултах, 10-мĕш класра вĕренекен Аннă Слесарĕва Демйан Бедный çырнă „В огненном кольце" сăвва килĕшӳлĕ, лайăх ăнланмала вуларĕ. Шăхасан районĕнчи тепĕр аван коллектив—Йамаш шкулĕнчи Никитин йертсе пыракан шавлă оркестăр пулчĕ. Ку оркестр „Авиаци маршне" тата „Хаваслă тантăшсен маршне" мухтавлă выљђарĕ. Кунсăр пуçне Никитин хăй хутлупăспа „Юность Максима" кинофиљмри йурра тата „Песня о встречном", „Песня о Сталине" йурăсене питĕ килĕшӳлĕ кăларчĕ.

Тимĕрçкасси колхозĕн хорĕ вăйсăр, сасăсем усă мар. Хор „Халĕ епĕр колхозра", „Епĕр вăйлă" тата ытти йурăсене те ӳркенсе, туйăмсăр йурларĕ. Çавăнпа ку хорăн хăй сумне çĕнĕ усă сасăсем хутшăнтарас йенĕпе ытларах ĕçлемелле. Çавăн пекех Вăрманйал учителĕсем — Сергейĕв (байанпа) тата Милитонов (мандолинăпа) чăтма çук начар выљђарĕç. Вĕсем „Молодость" йурра выљђанă чух аташса кайрĕç, йурра выљђаса пĕтермесĕрех пăрахрĕç. Çак ситменлĕхсем Шăхасан. выступленин пахалăхне чакарчĕç.

Тутаркас районĕн выступленийĕнче пĕтĕмĕшпех фољклорлă музыкă пулчĕ. Вырăнти авалхи йурăсене авалхи инструментсемпе выљђани, паллах, хăйне курă кирлĕ тата интереслĕ йапала, анчах вĕсем çинче çеç пăчланса ларни килĕшӳсĕр. Епĕр совет саманинче, колхозлă, социалисăмлă саманара пурăнатпăр, Октабĕр револђуци тывлечĕпе, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе лайăх пурăнма пуçланă пĕтĕм совет халăхĕ çĕнĕ йурăсем йурласа савăннă вăхăтра Тутаркас районĕн выступленинче çĕнĕ йурă пĕр çавра та пулманни кӳрентерет. Районри комиссии выступлени программине тума пĕлмен.

Фестивалĕн 10-мĕш кунĕнче йулашкинчен Çĕрпӳ районĕ хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Çĕрпӳ районĕ выступлени ваљђи тулли программă, тĕрлĕ йышши пултарулăх тăратнă. Хорсем те, уйрăм исполнителĕсем те, пĕр сăмахпа каласан, хăйсен йурри-кĕввисене аван кăларчĕç.

Пире пуринчен ытла Иванăвари „1905-мĕш çул" колхоз хорĕ (Иванов йертсе пыраť) кăмăла кайрĕ. Вăл вырăс халăх йуррисене йурлас маçтăрлăх йенчен, сасăсен тасалăхĕ, йантравлăхĕ тата килĕшӳлĕхĕ тĕлĕшĕнчен республикăра колхоз хорĕсенчен чи аванни пулса тăраť. Хор „Сизый голубчик", „Сею, вею", Я вечер молода", „Как во садике" йурăсене йурларĕ. Ытла та лирикăлă йанăрарĕç ку йурăсем.

Иккĕмĕш аван коллектив—Кушаркасскичи „Пионер" колхоз хорĕ. „Çĕнтерӳ йуррипе", „Колхоз йуррин"—кĕввисем ытарайми аван. Вырăнти кĕвĕ. Йурласса та ăста йурларĕç. Кун пек çĕнĕ кĕвĕсене чăваш композиторĕсем хут çине ӳкерме тивĕçлĕ.

Йулашкинчен Хурăнварти хĕлĕхлĕ оркестра палăртмала (Йемикăв йуртсе пыраť). Оркестр кăçал çеç организациленнĕ пулин те, пысăк куљтурлăх, маçтăрлăх кăтартрĕ. „Полюшко", „За речкой", „Песня Роберта Гранта" йурăсене т. ыт. те оркестр нотăсем тăрăх выљђарĕ. Ку оркестр республикăри ытти оркестăрсем ваљђи паха пример пулса тăраť.

Ферапонтов семйи (виçĕ çын) хăйне пĕр ансамбаљ пулса тухни питĕ савăнăçлă йапала. Кун пек семйисене ӳсме пур йенчен те пулăшни кирлĕ. Ферапонтовсем „Светит месяц", „Подгорная" тата „Колхоз частушкисене" килĕшӳлĕ выљђарĕç.

Йаику Арслан.

Суд хроники

Вăрнар посолкинче пурăнакан Иванпа Алексей Чувашлĕвсем ерех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те, велосипед йусаса тăракан Леонтйĕв патне пырса, йарăнса çӳреме велосипед ыйтнă. Лешĕ паман. Вара вĕсем Леонтйĕва хĕнеме пуçланă. Леонтйĕв кăшкăрнине илтсен Семенăвпа Инженерăв милиционерсем чупса пынă. Çав хулигансем милиционерсене те хĕнеме тытăннă. Арĕслесен те харкашма ăрăнман. Арĕслесе хупнă çуртра Чуваш лĕвсем рамăсене аркатнă, кăмакана ишĕлтернĕ, алăка çĕмĕрнĕ.

Вăрнар районĕнчи халăх сучĕ Иван Чувашлĕва 4 çуллăха, Алексей Чувашлĕва 3 çуллăха хупмала турĕ. ЧАССР Аслă сучĕн кассаци коллегийĕ суд пригăварне çирĕплетрĕ.

М. Н.

Шăхасан райĕçтăвкомĕн социаллă обеспечени пайĕн пуçлăхĕ Макар Прокопйĕв тата Çĕнĕ Чалкассинчи учител Илларион Петров малти Тукай йалне хăнана пынă. Вĕсем кунта хăйсене мĕнпе те пулсан палăртасшăн пулнă. Урамра урласа пыракан Петр Кузнецова тата Николай Максимова тĕл пулнă та, Прокопйĕвпа Петров вĕсене „Вы арестованы" тесе каланă. Петровĕ: „епĕ участкăри милиционер" тенĕ, Прокопйĕвĕ: „епĕ прокурор помошникĕ" тесе каланă. Вара арĕслесе колхоз правленине илсе кайнă та, икĕ сехет ытла тытса усранă. Арĕслени çинчен акт çырнă.

Сталинла Конституцин 127-мĕш статйине пăснăшăн, Шăхасан районĕнчи халăх сучĕ Прокопйĕвпа Петрова иккĕшне те 2-шер çуллăха хупса лартмала пригăвăр йышăнчĕ.

М. Микушкин.

Кунта тăшман çук-ши?

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕшкассинчи „Красный фронтовик" колхозра колхозниксем уйри тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра пĕрле апатланассине организациленĕ. Колхоз председателĕ Шемйакин колхозниксенчен мăшкăласа фекали шĕвекĕ турттарнă пичкене уйа шыв турттарма пани тата хуртланса кайнă какай пани çинчен колхозниксем çырса пĕлтерчĕç.

Редакци çак заметкăна Йĕпреç районĕнчи çĕрĕç пайне тĕрĕслеме йанăччĕ. Çак заметкă тăрăх райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра кăтартнисем тĕрĕс пулнă. Анчах çак колхозниксенчен мăшкăлакапа мĕн туни паллă мар.

Çак киревсĕр ĕçе тăвакансем хушшинче халăх тăшманĕ çук-ши? Çĕрĕç пайĕ ку киревсĕр ĕçе ытла пĕчик ĕç вырăнне хураť пулмала.

Пайан стадионра

Октаберĕн 12-мĕшĕнче „Темп" обшчествин стадионĕнче футбол вăййипе хулари малти вырăна тухассишĕн „Спартак" обшчествипе „Темп" обшчестви пĕррĕмĕш командисем выљђаççĕ. Республикăри ăмăртура „Темп" футболисĕсем спартакăвцăсене 1 : 0 шутпа çĕнтернĕ. Пайанхи матчра икĕ команди те хулари пĕррĕмĕш вырăншăн ăмăртаççĕ.

Вăйă 3 сехетре пуçланаť.

Ответлă редактăр
П. И. ИВАНОВ.

Цех начаљникĕ Аниçимов

Цехра Аниçимăв йулташа курма пулмарĕ. Вăл савăт технорукĕ патне, анчах туса пĕтернĕ мебĕљнăй цеха хăçан ĕçе йарасси çинчен калаçма кайнă.

Рабочисем хĕрсех ĕçлеççĕ, цехра ахаљ утса çӳрекен çук. Йегоравă маçтăр та лентăлă пăчăкăлă станокпа ĕçлекенсене ăнлантарса тăраť. Подручнăйĕнче ĕçлекенсем ирĕкрен материалсем турттараççĕ. Станочниксем ниçта утса çӳремесĕрех станок патĕнче ĕçлеççĕ, вĕсене пур условисем те туса панă.

Рабочисем кашнийех Октабĕр уйавчен мала тухса, куçса çӳрекен хĕрлĕ йалавă хăйсен алине илесшĕн. Каннă йе апат çинĕ вăхăтра вĕсем суйлав саккунне вĕреннипе пĕрлех пайанхи ĕç çинчен калаçаççĕ, сӳтсе-йаваççĕ. Пулнă çитменлĕхе çийĕнчех пĕтереççĕ, унтан урок тăваççĕ. Çавăнпа цех ытти цехсенчен малта пыраť.

Стођарнăй цехра ĕçлекенсем пурте хăйсен цех начађникне йуратаççĕ, ăна мухтаççĕ. Мухтама та тивĕç ĕнтĕ. Унăн хастарлăхĕ, пултарулăхĕ ĕçре курăнчĕ.

Петр Аниçимăв 22 çулта, комсомолĕс. Вăрман техникă техникумĕнчен вĕренсе тухсан, ăна Тӳрех Çĕмĕрлери „Труженик" савăта йанă. Виççĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ савăтра. Кăçал, стођарнăй цех прорыва кĕрсе кайсан, дирекци Аниçимăв йулташа çав цеха йараť. Малтанах цеха пырсан, вăл рабочисене техникăна вĕрентме пуçлаť, кружоксем организацилет. Кружоксенче хăйех вĕрентет. Çавăнтах хутла пĕлменнисене те вĕрентме пуçлаççĕ. Станоксене, ĕç хатĕрĕсене тата материалсене вăхăтра, çителĕклĕ таран хатĕрлеттерет. Станочниксене ниçта куçса çӳремесĕр ĕçлеме условисем туса параť. Станочниксем урлă подручниксене вĕрентеççĕ. Социалисăмла ăмăртăва кашни рабочийех йавăçтараççĕ. Çтена хаçачĕ те тухма пуçлаť. Ĕç хыççăн производствăлă канашлусем пулса иртеççĕ.

Çапла ĕçлени стођарнăй цеха прорывран тухма пулăшрĕ. Цех 9 уйăх планне 144 проц тултарса, чи мала тухрĕ.

Стођарнăй цех аван ĕçлени çакăнтан та курăнаť. Кунта малта пыракан стахановцăсен опычĕсене сарса пыраççĕ. Кашни кун цех, сменăсем, уйрăм рабочисем мĕнле ĕçлесе пынине тепĕр куннех кăтартулă хăмасем çине çырса пыраççĕ, стена хаçачĕ кăлараççĕ. Кашни сменă, станочник пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. Акă тĕслĕхсем: Кашкарăв, Вохонăв, Софронăвă, Йелфутинă т. ыт. те малтанах нормăна та тултарайман. Халĕ вĕсем ĕç техникине лайăх вĕренсе çитнĕ май, кашни кунах çĕнĕ çĕнтерӳсем тăваççĕ. Акă стођăр Кашкарăв йулташ çентабĕр уйăх планне 170 проц, Вохонăв—145 проц. Софронăвă—160 проц. Хайнов—182 проц. Анурейĕв—187 проц. тултарчĕç.

Рабочисен ĕçукçийĕ те ӳссех пыраť. Петр Назарăв май—ийуњ уйăхĕсенче 500—600 тенкĕ ĕçлесе илнĕ пулсан, çентабĕр уйăхĕнче 808 т., Макар Губанов—735 тенкĕ ĕçлесе илчĕç. Кашкарăв, Вохонăв, Софронăвă йулташсен те ĕçукçи малтанхи уйăхсенчен чылай ӳсрĕ.

Стођарнăй цех хăма çуракан цехпа ăмăртса ĕçлет. Октаберти Аслă револђуци XX çул тултарнă уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, стођарнăй цех хăй çине çулталăк планне уйавчен тултарма, çак октабĕр планне 150 проц. тултарма пулчĕ. Ăмăрту саралсах пыраť. Миронăв, Иевлевă, Хайнов, Андрейĕв стахановцăсем çак уйăхра кулленхи нормăсене 250—350 проц. тултарса ĕçлеççĕ.

Стађарнăй цехра 120 çынна йахăн ĕçлеççĕ, вĕсенчен плана тултарайманнисем çукпа пĕрех, станок çинче ĕçлекенсенчен 6 проц. стахановцăсем шутланаççĕ.

Çакăн пек ĕçлет çамрăк цех начађникĕ. Аниçимăв килес çул Института вĕренме кайма шутланăччĕ. Йаланах ĕç хыççăн кĕнекесем тăрăх вĕренет. Çав вăхăтрах суйлав саккунне вĕрентессипе пропагандист пулса ĕçлет, Осоавиахим совечĕн членĕ, унта та хастарлăн хутшăнса ĕçлет.

— Епĕ Хĕрлĕ Çара кайма тахçанах ĕмĕтленнĕччĕ. Ĕмĕт çитрĕ. Мана сывлăш флотне илчĕç. Тепĕр уйăхран каймала. Унта та епĕ пĕтĕм вăйа хурса ĕçлĕп. Хĕрлĕ çара кайиччен ман цех çулталăк планне тултаратех,—терĕ Аниçимăв йулташ.

Хар. Лисин.

ВĂРМАРТИ СПОРТИНВЕНТАР ХАПРĂКНЕ

Шофĕрсем, опытлă тракторист тата стођарсем

КИРЛĔ

ДИРЕКЦИ.

Адрĕс: ст. Урмары, Каз. ж—д.

Ишлей районĕнчи Ишек пасарĕнчен

Кăçалхи октаберĕн 9-мĕшĕнче кӳлсе тăракан

Лаша çухалнă

хăла тĕслĕ, çамка çинче шурă çăлтăр, кайри урисем пакăлчак таран шурă, çилхи сулахай йенче.

Пĕлекенсен çак адрĕспе пĕлтермелле: Çĕрпӳ районĕ, Çĕнйал йалсовечĕ, Чапайĕв йачĕпе кăнтăрла колхоза.

Районсенчи çутĕç пайĕсене тата учителсене

Чăвашсен Патшалăх Пединститутĕнче

1937—38 вĕренӳ çулĕнче харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен тата вĕренмен учителсене ваљђи

Консуљтаци параççĕ

тата екзамĕн йышăнаççĕ. Кашни уйăхрах 15, 16 тата 17-мĕш числасенче, 4 сехетрен 6 сехетчен каçхине, историпе литературă факуљтечĕсен дисциплини тăрăх, 2,3 тата 4-числасенче, математика факуљтечĕн дисциплини тăрăх, 2 тата 28 числасенче естествознани факуљтечĕн дисциплини тăрăх.

ДИРЕКЦИ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Хаçырăнăвсене пайала памасçĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 747. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиз. Заказ № 1923. Тираж 11564. ф. 58—92 см. 1—Т п. л.